# Аслă Çĕнтерӳ ячĕпе саламлатпăр!

ХЫПАР
1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă

# Чăваш хĕрарăмĕ

17(887) №, 2015, май/çу 8
Хакĕ ирĕклĕ.
16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

## Хаклă ентешĕмĕрсем!

Сире Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 70 çул çитнĕ ятпа пĕтĕм чунтан саламлатăп!

Çак уяв пирĕн халăхăн виçесĕр паттăрлăхĕпе хастарлăхне, пысăк хăюлăхĕпе çирĕп чун хавалне тата вăл Тăван çĕршыва хĕрӳллĕн юратнине витĕмлĕн сăнарлакан çутăран та çутă символ пулса тăрать!

Чăваш Енре çуралса ӳснĕ 200 пин ытла çын вăрçă фрончĕсенче тăшмана хирĕç хастар çапăçса Аслă Çĕнтерĕве çывхартма паха тӳпе хывнă. Вĕсен шутĕнче 66 Совет Союзĕн Геройĕ тата Мухтав орденĕн 11 тулли кавалерĕ. 106 пине яхăн ентеш каялла таврăнман – çапăçу хирĕнче пуç хунă тата сурансене пула госпитальсенче вилнĕ.

Çĕршыва çапăçу хирĕнче хӳтĕленĕ тата вăрçă хыççăнхи ишĕлчĕкрен ура çине тăма пулăшнă çынсен шучĕ çулсерен чакса пырать. Паян Чăваш Енре вăрçа хутшăннă пĕр пин çурăна яхăн ветеран тата 22 пин ытла тыл ĕçченĕ пурăнаççĕ. Вĕсенчен кашнинех лайăх пăхмалла тата влаç органĕсемпе общество организацийĕсен, çывăх çыннисемпе тăванĕсен ырми-канми пулăшăвĕпе тивĕçтермелле.

Пирĕн республикăра Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине халалланă асăну вырăнĕсемпе сооруженийĕсем 1100 ытла, çав шутра 500 ытла обелискпа мемориал, палăкпа стелла, асăну палли. Çĕршывăмăрăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн хăйсен пурнăçне панă паттăрсен палăкĕсене юсаса çĕнетес ĕçе Чăваш Енре пурăнакан мĕнпур çыннăн хастар хутшăнмалла.

Çитĕнекен ăрăва патриотла воспитани парас, çамрăксен чунĕнче хамăрăн çĕршывпа мăнаçланас туйăма çирĕплетес тата унăн шăпишĕн яваплă пулнине ăша хывма пулăшас тĕлĕшпе тăвакан пархатарлă ĕçшĕн ветерансене чĕререн тав тăватăп. Пирĕн çамрăксем çĕнтерӳçĕсен ăрăвне тивĕçлĕ пулса çитĕнесси, вĕсемшĕн вăрçă геройĕсен паттăрла ĕçĕсем яланах хăюлăхпа тӳсĕмлĕх, Тăван çĕршыва чунтан парăнса тăнин тĕслĕхĕ пуласси пирки пĕрре те иккĕленместĕп.

Пурне те çирĕп сывлăх, мĕнпур ыррине, тăнăçлăхпа юрату, шанчăк, телей тата ырлăх сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

● "Ырă çынсем çинчен пĕлтерме, чиновниксем кӳрентернисене пулăшма май пуррипе килĕшет радиожурналистика", – палăртать Вăрнар районĕнчен кунсерен Шупашкара ĕçе васкаканскер. 2 стр.

● "Мăян та тутлăччĕ пирĕншĕн…" – аса илет концлагерь асапне ачаллах туйса курнă хĕрарăм. 6 стр.

● Чăваш хĕрĕнчен, снайпертан, тăшман хăраса тăнă. 9 стр.



# Вĕсен паттăрлăхне вăхăт та хуплаймĕ

Паттăрсен ячĕсем вилĕмсĕр. Вĕсем, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче хаяр тăшмана парăнтарнăскерсем, хăйсен пурнăçне нимĕн шеллемесĕр Çĕнтерĕве çывхартнăскерсем, пирĕнпе ĕмĕрлĕхе сывпуллашса пыраççĕ. Вăхăт шăвать. Çулсерен чакать те чакать ветерансен речĕ. Анчах та вĕсен паттăрлăхне вăхăт та хуплаймĕ. Пирĕн, паян пурăнакансен, тата ыран çак çĕр çине килекенсен ăна манăçа кăларма юрамасть.

Чăваш Енрен фронта 208 пин те 229 çын тухса кайнă, вĕсенчен 106 пин те 470-шĕ каялла таврăнайман.

Çĕнтерӳ кунĕнче Хĕрлĕ тӳремре кашни çулах кăкăр тулли орден-медальлĕ ветерансене, хисеплĕ çыннăмăрсене курма епле кăмăллă. Кĕмĕл çӳçлĕ пиччесемпе аппасем çинчен куçа илме çук. Вĕсем – пире çутă кун, тăнăçлăх парнелекенсем. Уяв кăмăлне ача-пăча хăпартлантарать. Ӳсекен ăру патриот туйăмне хаклать. Ашшĕ-амăшĕ те Çĕнтерӳ кунне халалланă митинга ачасемпех пыма тăрăшать.

Вăрçăран хăрушăраххи çук. Ыратупа куççуль, инкек кăна илсе килет вăл. Текех ан пултăрччĕ вăрçă. Çĕнтерӳ кунĕ уяв кăмăлĕпе пĕрле çирĕп шанăç кӳтĕр. Тĕнче ача-пăча савăнăçлă сассипе тултăр!

**Елена АТАМАНОВА.**



ПИРĔН ХĂНА

Альбина Фомина хăй çуралса ÿснĕ ялтах, Вăрнар районĕнчи Пуканкассинче, пурăнать. Вырăнĕ тĕлĕнмелле хитре кунта. Вăрман, анлă уй-хир, йĕри-тавра çаран, таса та сиплĕ çăлкуçсем… Юнашарах Упаçырми юхса выртать. Чăн-чăн çăтмах тейĕн!

Çичĕ ачаллă çемьере ÿснĕ вăл. Тăван тăрăхне чунтан юратнăран Пуканкассинчех юлас тенĕ. Ашшĕ-амăшĕ лартнă çуртра, тĕп килте тăван йăмăкĕпе пурăнать паян Альбина Дмитриевна. Хастар хĕрарăм Вăрнар тăрăхĕнчен кашни кун Шупашкара ĕçе çÿрет. 23 çул руль пăркалаканскер çил-тăманра та, йĕпе-сапара та машина тапратса вĕçтерет кăна вăл.

# Пуканкасси хĕрĕ



Альбина Фомина тесен малтанах ăна куç умне кăлараймарăм. Пĕлместĕп мар, виçĕ çул каялла Леонид Ильин ячĕллĕ премие тивĕçнине те илтнĕччĕ. Телефонпа çыхăнса унăн лăпкă, хăлхана ачашлакан пĕр кĕвĕллĕн юхса пыракан сассине илтсен вăл паян Чăвашрадиора ертсе пыракан, халăх кăмăлне каякан «Çула тухсан», «Тÿсĕм», «Чăваш тĕнчи» кăларăмсем аса килчĕç. Унпа темĕнччен калаçса ларнă май Альбина Дмитриевна радиожурналистикăна чунтан парăннине те туйса илтĕм. Телекуравран, хаçатран та çывăхрах-мĕн радио уншăн. Унсăрăн çав ĕçе çĕнĕрен таврăнман та пулĕччĕ. «Журналистика килĕшет мана. Лайăх та ырă çынсем, вĕсен шăпи, тĕрлĕ пулăм çинчен материал хатĕрлетпĕр. Çак майпа эпир те халăха пăртак та пулин пулăшу кÿме пултаратпăр-çке. Чиновниксем патĕнче хÿтлĕх, тĕрĕслĕх тупаймасан редакцие килеççĕ. Ку савăнтарать. Апла пирĕн витĕм, вăй пурах. Çынсем шаннине, хисепленине хамăр та курса тăратпăр», – тет Альбина Дмитриевна.

## Элĕк районне хупламалăх

И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУри историпе филологи факультетĕ хыççăн Альбина Фоминана направленипе Элĕк райхаçатне янă. Вăрнара, ачаран лайăх пĕлекен редакцие тем пек каяс тесен те лекеймен. Уншăн пачах та ÿкĕнмен вăл. Ĕçе пуçăннă вăхăтра хăйĕнпе пулса иртнĕ интереслĕ самантсене халĕ те манаймасть Альбина Дмитриевна. Ялхуçалăх пайĕнче ĕçлекен çамрăк корреспондент пĕррехинче номере кĕске материал сĕннĕ. Кăштахран унăн пÿлĕмне редактор вĕçтерсе кĕнĕ.

– Альбина, çакăнта мĕнле йăнăш куратăн? – ыйтнă хайхискер. Паллах, хăй статйинче нимĕнле çитменлĕх те тупайман вăл. Яваплă секретаре кăтартнă, вăл та курман. «Ку информацие çавăн чухлĕ тонна хăмла туса илнине палăртнă, «симĕс ылтăна» вара центнерпа виçеççĕ. Çырнине ĕненес пулсан – хăмли Элĕк районне виçĕ хутчен хупласа хумалăх та çитетчĕ», – тенĕ ăшшăн кулса редактор.

Çу кунĕсенче Элĕке яланах велосипедпа çÿренĕ Альбина Фомина. Куракăш çырми урлă каçма çăмăл пулманнине, унта мĕн чухлĕ асапланнине паянхи кун та манаймасть. «Эх, çак Элĕк çине хăçан бомба ÿкĕ-ши?» – теттĕм тарăхса», – иртнине кула-кула аса илет вăл халĕ. Чăтăмлăхĕ пĕтсе çитнĕ пикен, пĕрремĕш отпуск укçипе «Минск» мотоцикл туяннă. Çапла майпа тинех парăнтарнă Куракăш çырмине.

## Комсомол секретарĕ

Элĕкре виçĕ çул ĕçленĕ хыççăн тăван тăрăхах таврăнма шухăшлать Альбина Фомина. Пултаруллă та харсăр корреспондента редактор ĕçрен ярасшăн та пулман. Çине тăнă кÿршĕ район пики. Анчах та ăна Вăрнар район хаçатне мар, ÿкĕте кĕртсе совхоз-техникума комсомол секретарьне вырнаçтарнă.

– Ĕçĕ калама çук интереслĕччĕ. Студентсемпе вăхăт иртни те сисĕнместчĕ. Тутарсем йышлăччĕ техникумра. Анчах та чăвашсене питĕ кÿрентеретчĕç. Халăх дружинин ертÿçи пулма хайхи тутарсен «чи аслине» суйласа лартрăм. Мĕн тетĕр, икĕ халăх хушшинчи туслăх çийĕнчех йĕркеленсе кайрĕ: вăрçă-харкашу та пĕтрĕ. Кирек кампа та пĕр чĕлхе тупма тата темĕнле йывăрлăха та çĕнтерме май пур, – каласа кăтартать Альбина Дмитриевна.

Чĕрĕ те харсăрскере кăштахран Вăрнар райкомĕн комсомол секретарьне суйлаççĕ. «Ун чухне çамрăксем те пĕр-пĕринпе питĕ туслăччĕ. Мĕнле кăна каçсем ирттермен-ши эпир? Çамрăклăх çав çулсенче иртнишĕн тем пек савăнатăп. Телейлĕ, çунатлă пулнă эпир. Кашни çынра ыррине, лайăххине курнă. Комсомол организацийĕ тĕлĕнмелле лайăх шкулччĕ», – чунне уçать Альбина Фомина. Йăлана кĕнĕ тăрăх тата комсомол секретарĕ пулнă май кашни призыв вăхăтĕнчех Вăрнар станцине каччăсене çара ăсатма тухнă. «Лайăх кайса килмелле, çĕршыва тивĕçлĕ сыхламалла, пирĕн санпа мухтанмалла пултăр, – çапла сăмахсем каласа ăсатни ашшĕ-амăшĕшĕн те пысăк чыс пулнă. Ывăлĕсене хисеп туни, манманни çывăх çыннисене куççуль кăларттарнă.

## «Парнене ăçта хумалла?»

Вăрнар райкомĕн комсомол секретарĕ хыççăн Альбина Дмитриевнăна вырăнти радиона тĕп редактора суйланă.

– Эпир ытларах шкул ачисене явăçтараттăмăр. Мĕнле кăна конкурс-викторина хатĕрлемен-ши? Радио çурчĕ кĕрлесе кăна тăратчĕ. Алăк кунĕпе те хупăнма пĕлместчĕ, – аса илет радиожурналист.

Пĕррехинче çапла «Районти радиона кам лайăхрах саламлать?» ятпа конкурса йĕркеленĕ. Саламĕпе пĕрлех редакцие парне йăтса килекен те нумай пулнă. «Ку япалапа мĕн тумалла?» – шăнкăравланă тĕп редактор патне оператор. «Студие кĕртсе хур», – хуравланă хирĕç. «Ку чĕрĕ. Кролик. Мĕн тумаллине те пĕлместĕп», – пĕлтернĕ оператор. Ниçта хума аптранипе кайран çав кролике тăванĕсене парнеленĕ редактор. Кăштахран «Çĕнтерÿ çулĕ» Издательство çурчĕн директорне-тĕп редакторне суйланă Альбина Фоминана.

«Лайăхах ĕçлерĕмĕр, йывăрлăхсене çĕнтертĕмĕр. 5 çул хушши дипломсене тивĕçрĕмĕр. Аван ĕçлени тепĕр чухне пурне те килĕшмест. Кайран уйрăм харпăрлăхри типографире вăй хума тытăнтăм», – паллаштарать Альбина Дмитриевна кунçулĕпе.

## Атте пахчи – улма пахчи

– Çемьере иккĕмĕшĕ пулнăран манăн хамран кĕçĕннисене пăхма тивнĕ. Выльăх пăхнă, вутă хутнă… Шкултан таврăнсан хăвăртрах аннене пулăшма колхоз фермине чупнă: сысна та пăхнă, ĕне сунă, – ачалăхне куç умне кăларать Альбина Дмитриевна.

Ашшĕ-амăшĕ ĕç урлă тăван ывăл-хĕрне туслăха хаклама, пĕр-пĕрне хÿтĕлеме, йывăрлăхра алă пама вĕрентнĕ. Çичĕ пĕртăван паян питĕ килĕштерсе пурăнаççĕ.

Альбина Дмитриевна ялта йытă-кушак, чăхсем усрать. Хирти çĕр пайне тара панă. Йăмăкĕпе килте темĕн тĕрлĕ пахчаçимĕç, чечексем ÿстереççĕ.

– Ялсăр пурăнаймастăп. Килте лăпкă, канлĕ. Шупашкарта пĕр кунлăха юлсан та темĕн çитмест пек туйăнать. Хуларан килсенех пахча тăрăх чупса çаврăнатăп, вара чун лăштах пулать. Пуринчен ытла вара кăмака умĕнче икерчĕ пĕçерме юрататăп, – чунне уçать Альбина Дмитриевна.

Ашшĕн сачĕ тĕлĕнмелле пысăк. Чие, слива, груша, панулми кашни çулах çимĕçĕпе савăнтараççĕ. Университетра вĕреннĕ чухнех пахча хыçне хурăн, çăка, çĕмĕрт йывăççисем лартнă хĕр. Халь вĕсем вăрман пулса кашлаççĕ. Ытарма çук хитре тавралăха тата та илем кÿреççĕ.

**Елена АТАМАНОВА.**

Автор сăнÿкерчĕкĕ.

ЫРĂ ТĔСЛĔХ

# Хисеп çулĕ

**Элĕк районĕнчи Татмăш ялĕнче пурăнакан Галина Сергеева 77-ре халĕ. Апла пулин те килти хуçалăхра выльăх-чĕрлĕх усрать, çуркуннерен пуçласа кĕркуннеччен эмел куракĕсем пухать.**

– Мĕн ĕмĕрĕпех пурнăç тăвассишĕн тăрăшрăм. Нушине сахал мар куртăм пулин те ачасене тĕрĕс-тĕкел ура çине тăратма пултартăм, – тет хĕрарăм.

Мăшăрĕпе Николайпа çирĕм пĕр çул пĕрле пурăннă. Паян та кил таврашĕнчи ĕçсене унпа пĕрле тумалла та, анчах вăл юнашар çук, чире çĕнтерейменнипе хĕрĕх сакăр çултах çывăх çыннисенчен, ачисенчен яланлăхах уйрăлса кайнă.

Галина Сергеева Красноармейски районĕнчи Анаткас ялĕнче çуралса ÿснĕ. Шкулта çичĕ класс вĕреннĕ хыççăн тăван хуçалăха тĕрлĕ ĕçре пиçĕхнĕ. Пулас мăшăрĕпе Татмăш ялне аппăшĕ патне хăнана килсен паллашнă. Пĕрпĕринпе çулталăка яхăн çыхăну тытнă хыççăн хĕрпе каччă 1954 çулта çемье çавăрнă. Çамрăк мăшăр ĕçсĕр ларман, Николай Сергеев Элĕкри пĕр предприятире электромонтера тимленĕ, Галина Матвеевна «Волга» колхоз ферминче дояркăра вăй хунă. Иккĕшĕ те малашлăха çутă шанчăкпа пăхнă. Çавăнпах та пулĕ Сергеевсем ултă ывăлпа пĕр хĕр кун çути парнеленĕ. Анчах мăшăрĕ пурнăçран вăхăтсăр уйрăлса кайни Галина Матвеевнăн чĕрине хытах ыраттарнă. Хуйхăпа аманнă чунне ачисемпе тата ĕçри юлташĕсемпе калаçса пусăрăнтарнă. Йывăр пулсан та хуçалăха ÿкмен, кашни кунах фермăна утнă. Унтан килсен те кил-çуртра хупăнса ларман, Вутланти культура çуртне урай çума васканă.

– Ачасемшĕн вутри пек çунаттăм. Вĕсене пурнăç çулĕ çине тĕрĕс-тĕкел те ăс-тăнлă кăларасшăн вăй-хала хĕрхенмерĕм, – каласа парать Г.Сергеева.

Шел те, икĕ пепкине пытарма тивнĕ унăн. Халĕ ытти ачи ÿссе çитĕннĕ. Килĕ-çурчĕ кирпĕчрен. Лăпкăн кăна пурăн темелле. Çук вĕт, Галина Матвеевна çав-çавах ĕçпе вăхăта иртерет. Çу кунĕсенче пушă самант тупăнсанах çырма-çатраллă вырăна васкать, эмел куракĕ пуçтарать. 27 çул çак ĕçпе аппаланать. Эмел куракĕсен пуçтарнипех çĕнĕ çурт тунă чухне строительство чылай материалне туянма пултарнă.

– Тăван хуçалăха çĕклессишĕн нумай тăрăшрăм. Вăйхал пуртан хама хĕрхенме те пĕлмен, ĕçрен кунĕпе те уйрălман, виç-тăватă сехет çывăрнипех çырлахнă, – иртни патне таврăнчĕ вăтă.

Мĕн тăвас, пурнăçăн хăйĕн йĕрки: чăн-чăн хисеп патне илсе çитерекен çул яланах тумхахлă. Ĕçе юратни, халăх уттипе тан пыни ят-сума тивĕçме пулăшнă. Халĕ Галина Матвеевна ачисемпе, мăнукĕсемпе чунтан савăнать.

**Юрий КОРНИЛОВ.**

Элĕк районĕ.





ТĔЛПУЛУ

# Малашлăх – çамрăксенче

**Тунтикун ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Пĕтĕм тĕнчери çамрăксен массăллă информаци хатĕрĕсен Атăл леш енчи "Росинка" физкультурăпа сывлăх центрĕнче иртнĕ "Атăл çинчи тĕлпулусем-26" фестивальне хутшăннă.**

Йăлана кĕнĕ фестивале кăçал Раççейĕн 63 хулинчен 350 çын пуханнă. Вĕсене хăйсен опычĕпе паллаштарма РФ Журналистсен союзĕн, ТВЦ телеканал, "Русский репортер" журнал, Мускаври патшалăх университечĕн тата Хусанти федераци университечĕн журналистика факультечĕсен представителĕсем килнĕ.

Михаил Васильевич фестивале хутшăннисен ыйтăвĕсене хуравланă, вĕсемпе çĕнĕ медиакультура йĕркеленĕвĕн çивĕч ыйтăвĕсене сӳтсе явнă.

Фестиваль йĕркелӳçисем – Пĕтĕм Раççейри çамрăк журналистсен лигин чăваш уйрăмĕ тата ЧР Информполитика министерстви.

**Елена АТАМАНОВА.**

ВĔРЕНТӲ

# Ялхуçалăхĕпе кăсăклантарасшăн

**Шкул ачисене ялхуçалăхĕпе ытларах кăсăклантарас, ăна таранрах шĕкĕлчеме илĕртес тĕллевпе кăçал республикăра 7–11 классенче вĕренекенсен хушшинче пĕрремĕш хут хресчен олимпиадине йĕркеленĕ. Ăна иртерес шухăша малтанах Куславкка тăрăхĕнчи "Энĕш" хресчен-фермер хуçалăхĕн пуçлăхĕ Василий Семенов хускатнă. Вĕренӳ тата Ялхуçалăх министерствисем пуçарăва ырласа йышăннă. Шăпах çак ведомствăсем пулăшнипе иртнĕ олимпиада.**

Унăн çĕнтерӳçисем те паллă. Вĕсене ытларикун Куславкка районĕнчи Карачри культура çуртĕнче чыслană. Пĕрремĕш вырăна Анатолий Алексеев /Çĕрпӳри 1-мĕш шкул/ тухнă. Куславкка районĕнчи Елчĕкри вăтам шкулта вĕренекен Алина Анисимовăпа Надежда Мартьянова иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене пайланă.

Ялхуçалăхне тарăнрах тĕпчеме илĕртекен олимпиада парнисем те сумлă. Команда кăтартăвĕсемпе пĕрремĕш вырăна тата 25 пин тенкĕ премие Елчĕкри вăтам шкул тивĕçнĕ. Куславкка районĕнчи Елчĕкри вăтам шкул – иккĕмĕш, Тăвайри вăтам шкул виççĕмĕш вырăнсемпе премисене /15 тата 12 пин тенкĕ/ тивĕçнĕ.

**Татьяна НАУМОВА.**

ПРЕМЬЕРА

# Пĕр çыншăн – самолет

**Тĕнчере кам хуçа? Вăй питти ирсĕр çынна влаç тилхепине тыттарма юрать-и? Мĕн патне илсе çитерет çакă? Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕ "Çерем çинчи çиçĕм" çĕнĕ спектаклĕпе куракансен кăмăлне тупрĕ.**

Ку ĕç пĕччен фронтовикăн шăпине сăнлать. Акă вăл паянхи пурнăç: ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Кăтра Тимухха /Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ Владимир Григорьев/ нимĕнле саккуна пăхăнмасăр хăй йĕрке тăвать. Тĕлли-паллисĕр çӳрекен çамрăксене хăйне чăрмантаракан çынсене тĕп тума хушсах тăрать вăл. Хайхискер вăрçă ветеранĕн хваттерне хăй çине çыртарнă. Апла тăк мирлĕ пурнăçшăн юн тăкнă ватă мĕн тума кирлĕ ăна? Хисепе тивĕçлĕ çынна чыслă пытарнăшăн кăкăр çапать-ха тата. Ветерана пуçлăхах вĕлерттернине ял халăхĕ тĕшмĕртет, анчах явап тыттарма хăяймасть. Çутăшăн вăхăтра тӳлеймен Тăм Мирунне те /Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ артисчĕ Василий Павлов/ çĕре чикесшĕн çакăнти ертӳçĕ. "Пурин умĕнче те ырă пулаймăн", – тӳрре тухма хăтланать Тимофей Софронович. Юрать-ха ялти ватăсем – Тăм Мирунĕ, Укахви /Чăваш халăх артистки Лидия Красова/, Яппун Кули /Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ Николай Дмитриев/ – пĕр-пĕрне пăрахмаççĕ.

Тăм Мирунĕ 1941 çулта оккупациленĕ Кейӳ хулинчен выçă ачасене партизан отрядне ăсатнă. Хăй аманнă, кайран тыткăнра нушаланнă. Çакăн çинчен ял çыннисене каласа кăтартман вăрçă ветеранĕ. Мухтанасси, хăйне паттăр пек кăтартасси çук унра. Трагикамит пуçламăшĕнчех ялта шăвшав çĕкленет. Пурте Израильтен килекен хаклă хăнасене кĕтме пуçлаççĕ. Аппăшĕпе шăллĕ Саррăпа /Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисткисем Венера Пайгильдина/ Мэир /Леонид Яргейкин/ хăйсене çăлнă Николай Тайорова шыраççĕ иккен. Анчах кам вăл? Ял халăхĕ пĕлмест. Яппун Кули хăйĕн тăванĕсене тупас тĕллевпе çыру хыççăн çыру шăрçаланă. Çаплипех шанчăкне çухатмасть ватă. Анчах кăлăхах – аппăшĕпе шăллĕнчен пĕр хыпар та килмест. Ак тамаша, хут çыракан Майоров вырăнне Тайоров тесе янă та урăх хушаматлă пулса тăнă Яппун Кули. Сăмах май, аякран куçса килнĕскер чăвашла вĕреннĕ.

Юратнă качакине вĕлернине чăтаймасăр аптăраса ӳкет Тăм Мирунĕ. Пĕрремĕш пулăшу пама тăнă Сарра Герберт хăйсене çăлнă салтака палласа илет. Еврей хĕрарăмĕ Израильтен самолет чĕнни – пуриншĕн те кĕтменлĕх. "Пĕр çыншăн-и?" – тĕлĕннине пытармасть пуçлăх. Этем пурнăçне нимĕнле укçапа та виçме çук. Çакна ăнланса илчĕ-ши Кăтра Тимухха?

"Бабий Яр /тĕрлĕ наци çыннине, çав шутра еврейсене те, персе пăрахнă вырăн/ историйĕпе тĕплĕнрех паллăшнă хыççăн çак пьеса çырăнма пуçларĕ. Еврейсем хăйсене пулăшнă чăвашсем патне те килсе тухма пултарнă", – каласа кăтартать пьеса авторĕ, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ тата çыравçă Анатолий Хмыт. Трагикамитре çынлăх ыйтăвне хускатнă. Йĕри-тавра пĕр-пĕрне ăнланни çитмест. "Спектакль вăхăтĕнче куççульпе йĕрекен арçынсене асăрхарăм. Чаршав хупăнсан артистсем хăйсем те хурланчĕç. Апла тăк трагикамит вĕсен чунне витернех", – пĕтĕмлетет автор. Куракансем тăвăллăн алă çупни те ĕç ăнăçлă пулса тухнине çирĕплетет.

Ку ĕç театр репертуарне ăнсăртран кĕмен. Иосиф Дмитриев ертсе пыракан наци драматургĕсен лабораторийĕнче вуласа кăтартнă ăна. Пьесăна ЧР Культура министерстви те ырланă.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**

Надежда АНДРЕЕВА сăнӳкерчĕкĕ.



САМАХ ПАРĂР-ХА

# Тăнăç пурнăçа хакласчĕ

Татьяна НАУМОВА

**Çу уйăхĕ ăшă та тӳлек çанталăк çеç мар, чаплă та пысăк уяв та илсе килет. Аслă Çĕнтерӳ кунне кам кĕтмест-ши? Астăватăп: мĕн ачаран çак кун умĕн ялти паттăрсене асăнса лартнă палăк тавра шăлса тасататтăмăр. Уяв çитсен вара унта шкулĕпех каяттăмăр. Малта пыракансем тĕрлĕ чечек-хăюпа илемлетнĕ, чăрăш лăссинчен сыхса çавăрнă венок йăтса пыратчĕç. Ăна тивĕçлисене çеç шанатчĕç. Ял халăхĕ те йышлă пухăнатчĕ. Пахчара пуç çĕкленмесĕр ĕçлеме пăрахса мирлĕ пурнăçшăн пуçне хунă асаттесемпе асаннесене, кукамайсемпе кукаçисене, ашшĕ-амăшне, тетĕшĕ-йăмăкне, тăван-пĕтенне тав тума, вĕсен умĕнче пуç тайма туртăнатчĕ ял халăхĕ. Çак йăла халĕ те кашни ял-хуларах упранать.**

**Вăрçăран таврăнайманнисене асăнма, ветерансене саламлама пухăнсан Çĕнтерӳ кунне халалланă юрăсем янăратчĕç. Пĕтĕм халăхпа та, уйрăммăн та пĕрре мар шăрантарнă вĕсене. Анчах ача чухне çак уяв мĕншĕн куççульлĕ иккенне, тен, чухласах та пĕтерейменччĕ. Халĕ вара, çулсем иртнĕçемĕн, юн, тар шăрши çапнă уяв çинчен хăйланă кĕвве илтмессерен куçăм шывланать. Çĕнтерӳ мĕн тери пĕлтерĕшлине, хаклине чăннипех те чунпа туятăн.**

**Савăнăç та, хурлăх та кӳрет çак уяв. Ара, вăрçă инкекĕ пур çемьене те пырса тивнĕ-çке. 1418 кунпа çĕр тăсăлнă вăрçă кашни киле хуйхă-суйхă илсе килнĕ. Республикăра вăрçă ахрăмĕ пырса тивмен пĕр ял кăна мар, пĕр çемье те çук. Фронта чăваш халăхĕн 1/5 пайне ăсатнă-çке. Тăватă çул хушшинче 208 пин ывăлпа хĕр тăшманпа çапăçма тухса кайнă. Вĕсенчен çурри ытла çапăçу хирĕнчех пуç хунă. Пĕр çемьерен фронта пиллĕкĕн-ултăн тухса кайнă тĕслĕх те сахал мар. Хăшпĕр амăшĕ каялла пĕрне те чĕрĕ-сывă кĕтсе илеймен... Çухату ытла та пысăк пулнă çав.**

**Кашни çапăçу хыççăн вилнисен шучĕ хăрушла ӳссе пынă. Анчах чунĕпе çирĕп, паттăр, хастар совет салтакĕ çĕршыв пуласлăхĕ унăн аллинче иккенне лайăх ăнланнă, çавăнпах тăшмана май пур таран хăвăртрах аркатасшăн çуннă, паттăрлăхпа палăрнă. Ахальтен мар 54 пине яхăн ентешĕмĕре тĕрлĕ орден-медальпе чысланă. 80 ытла фронтовик /19-шĕ вилнĕ хыççăн/ Совет Союзĕн Геройĕ ята тивĕçнĕ. Вĕсенчен 51-шĕ 28 çула та çитеймен. Чăваш Енĕн 16 паттăр салтакĕ – Мухтав орденĕн тулли кавалерĕ.**

**Чĕрĕ-сывă таврăнайманнисен йышĕнче хыпарсăр çухалнисем те нумай. Вăрçă кĕрленĕ вырăнсенче тăванла масарсем юлнă. 300-400 пин салтак ĕмĕрлĕх канăç тупнă унта. Обелисксем çинче вара 50-100 пинĕшĕн ячĕ çеç çыраннă. Пурнăçне тăван çĕршывшăн, тăван халăхшăн шеллемен кашни салтак ячĕ «Астăвăм кĕнекинче» те палăрса юлать. Вĕсене пирĕн те асрах тытасчĕ. Вăрçă ветеранĕсене манманни вĕсенчен ытла хамăра кирлине манас марччĕ.**

**Чăваш çĕрĕ лаптăкĕпе пысăках мар пулин те Аслă Çĕнтерĕве çывхартассинче унăн пĕлтерĕшĕ те пур, нумай пулăшу кӳнĕ вăл. Пăшал йăтса чупакан та, суха тăвакан та эпир çĕнтерессе пĕр самантлăха та шанма пăрахман. Ăна тар тăкса, ыратăва пусарса çывхартма тăрăшнă.**

**Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çулĕсенче пирĕн республикăра 75,5 пин ытла салтак хатĕрленĕ. Вĕсен йышĕнче 13658 снайпер, минометчик, пулеметчик, танкист пулнă. Шел те, чылайăшĕ паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ. 1942-1943 çулсенче çеç çамрăксемпе комсомол уйрăмĕсенчи хĕрарăмсен пайĕсенчен фронта валли 11,5 пин ытла телефонисткăпа радистка тата ытти специалиста хатĕрленĕ. Пин ытла медсестрапа икĕ пин ытла санитари дружинници хатĕрленĕ районсемпе хула комитечĕсем.**

**Сăмах май, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи кĕрленĕ вăхăтра Чăваш Енрен фронта 6 пин ытла хĕрарăм тухса кайнă. Хăшĕ-пĕри хĕç-пăшал тытса арçынпа юнашар тăшмана хирĕç çапăçнă.**

**Тылра та çăмăл килменнине пĕрре мар илтнĕ-курнă эпир. Ватти-вĕтти те тăшмана хăвăртрах тĕп тăвассишĕн кунне-çĕрне пĕлмесĕр тăрăшнă. Уй-хирте ĕçленĕ, чăлха-нуски сыхнă... Нимĕç-фашист оккупацийĕнчен хăтарнă çĕрсенче ялхуçалăхне чĕртес ĕçре те республика сумĕ пысăк. Çĕрулми, тĕштырă вăрлăхне пин-пин тонна ăсатнă чăваш. 17 пин ытла вылăх пуçĕ панă. Пин-пин хĕр-упраçпа яшкĕрĕм ытти регионсене ишĕлнĕ заводсемпе шахтăсене çĕнĕрен чĕртсе тăратма туха-туха кайнă.**

**Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи 27 миллион совет çыннин пурнăçне илсе кайнă. Кашни çемье пĕр е темиçе тăванне çухатнă. Анчах çухатусăр çĕнтерӳ пулмĕччĕ...**

**1945 çулхи çуркуннене çывхартнă кашни паттăр ятне асра тытасчĕ. Мирлĕ те тăнăç пурнăçа хаклама пĕлесчĕ.**

ВĂРÇĂ АЧИСЕМ

## Аттесĕр...

Чун кӳтнипе çырма лартăм. Макăра-макăрах 73 çула çитрĕм. Пире, вăрçă ачисене, çаплипех пулăшмаççĕ. Эпир аттене курман. Çак сăмахăн пĕлтерĕшне те пĕлместпĕр. Ку тарана çитиччен пире майлă саккун йышăнма вăхăт пулман-и? Ах, çакăншăн чун ыратать. «Вăрçă ачисем» кĕнеке кăларасчĕ. Кусçуль кăларса вуламаллискер пулĕ вăл.

Пире, вăрçă ачисене, вăй-хал илме те çăмăл пулман. Юрать кун-çула укçалла илме çук. Аттепе аннешĕн те пурăнасчĕ-ха. Вĕсен ĕмĕрĕ вăрăм килмен.

Вĕчĕрхенмелли тупăнсах тăрать. Тĕлĕнмелле хăш-пĕр çынран. Вăй питти ĕçлеме ӳркенет. Ашшĕ-амăшĕ тĕпренчĕкне пăхасшăн мар. Сывăх çыннисем пур çĕртех пепки ача çуртĕнче çитĕнет. Тăванĕсене кĕтет пĕчĕкскер... Пире анне высăллă-тутăллă çитĕнтернĕ. Пăрахса хăварас е çынна парас шухăш тĕвĕленме те пултарайман унăн пуçĕнче. Тавах ăна уншăн. Ачи-пăчине пăхман ашшĕ-амăшне явап тыттармалла. Тен, ун чухне лару-тăру лайăх енне улшăнĕ?

**Р.ЛЕОНТЬЕВА.**
Шупашкар хули.

## Икĕ çунатран пĕрин ăшшине те курмарăм



Çын хыпарсăр çухалмасть теççĕ. Анчах манăн атте Георгий Петров Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче хыпарсăр çухалнă.

Анне Дария Леонтьевна 1948 çулта сарăмсăр вилчĕ. Тылра хастар ĕçленĕшĕн медаль те пурччĕ унăн. Аттерен çамрăклах пĕччен юлнă пулин те ятне яман вăл.

Мана вара, хӳтлĕхсĕр хĕре, пĕр çăмăллăх та пулмарĕ. Ара, эпĕ никама та кирлĕ пулман ĕнтĕ. Ял канашĕ ун чухне те ĕçленĕ-ха, анчах пулăшма никам та шухăшламан. Пирĕн класс ертӳçи Мускавран килнĕ çамрăк вĕрентекен Мая Михайловначчĕ. Эпĕ 8-мĕш класра вĕреннĕ чухне вăл пирĕн киле пырса курчĕ те районти вĕренӳ пайĕнчен мана уйăхсерен 22 тенкĕ укçа памалла турĕ. Асапăма майра, чăвашла пĕлмен çын, ăнланчĕ. Паян кун та ăна ырăпа аса илсе тав тăватăп. Высăллă-тутăллă, çĕтĕк çӳресех 10 класс пĕтертĕм çапла.

Ачалăхăмпа çамрăклăхăм çав тери тертлĕ иртрĕ. Атте вăрçа тухса кайнă чухне 6 уйăхри ача пулнă эпĕ. Анне вилнĕ чухне тăхăртаччĕ. Икĕ çунат айĕнче çуралса пĕрин ăшши те юлмарĕ. Асаннепе иксĕмĕр пурăнкаларăмăр. Унăн та кусĕ курмастчĕ. Аттен пиччĕшĕ Василий вăрçăра вилнĕччĕ, ун ячĕпе асаннене 50 тенкĕ укçа килетчĕ. Мĕнпур мул та çавă çеç пулнă.

9 çулта кăна пулин те кĕркунне мана та 5 чалăш ыраш ани виçсе пачĕ бригадир. Çурлапа вырма, кĕлте çыхма аннех вĕрентнĕччĕ. Хĕвелпе пĕрле тăрса вăл аниччен шăрăхра ана çинче асапланаттăм. Шкула кайма та вăхăт çитетчĕ – тулă ани ниепле пĕтме пĕлместчĕ. Ăна вырма çукчĕ тата – тăпăлтармаллаччĕ. Суратне те, çĕмелне те хамăнах тумаллаччĕ. Çăвĕпе тар юхтарса ĕçлесе илнĕ 5 михĕ тырра лашапа илсе килсен асанне те савăннипе, те хурланнипе макăрчĕ. «Тинех çăкăр çийĕпĕр», – терĕ.

Ача тесе ачашламан мана. Саккăрмĕш класра вĕреннĕ чухнех лаша кӳлнĕ. Пĕр ирхине тислĕк тăкма тесе пуçтараннăччĕ. Урапа çине ларса тилхепине тытма те ĕлкĕрнĕччĕ, те çук та – лаша çырманалла сиккипе чуптарчĕ, унтан каялла конюх умне ĕрхсе çитрĕ. Мĕнле ӳксе юлман-ши эпĕ? Çапла пĕр вилĕмрен çăлăнтăм.

Çуллаччĕ ун чухне. Бригадир мана урапа çине пĕр пичке лартса кӳршĕ яла солярка илме ячĕ. Хуçа патне килнех кĕтĕм. Кăнтăрлахи апат вăхăчĕ çитнĕччĕ ахăр. Мана итлесе те пĕтермерĕ вăл – кăшкăрма тытăнчĕ. Апат çиме чăрмантарнăшăн вăрçса пĕтерчĕ. Тухрăм та макăрсах ятăм. Ара, эпĕ хама валли ыйтмастăп-çке. Ярса парсан солярккăна трактор патне чиперех çитертĕм.

Çу кунĕсенче тислĕк тăкнă, утă турттарнă пулсан, хĕлле уйран улăм илсе кĕмеллеччĕ. Асаннепе иксĕмĕре колхоз уйăхсерен 8 килограмм тырă паратчĕ. Пĕррехинче ăна илме кайсан ампар хуçи ман çине сиксе ӳкрĕ. «Колхозăн пулăшмалла-им сире? Сирĕн ăна пулăшмалла мар-им?» – тесе вăрçрĕ. Ун чухне çумăр пĕлĕчĕсем капланса килнĕччĕ. Халăх михĕсем йăтатчĕ. Мана та вĕсем патне ячĕç, пĕр михĕ хучĕç хам çине. Эпĕ ун йывăрăшне чăтаймасăр ӳкертĕм. Йĕре-йĕре каласа кăтартрăм çаксене асаннене. Вăл мана лăплантарса: «Çав арçын вăрçăра та пулман, ача та ӳстермен. Çавăнпах çын нушине ăнланмасть», – терĕ.

Мĕншĕн çыратăп-ха çаксене? Аттесĕр, аннесĕр ӳсрĕм. Вăрçăран таврăнайман салтаксен ачисене тимлĕх уйăрманни чĕрене ыраттарать. Çĕнтерӳ кунĕнче те пирĕн ятпа пĕр ăшă сăмах та каламаççĕ-çке. Камшăн çапăçса вилнĕ-ши пирĕн аттесем?

**Евгения ИВАНОВА.**
Сĕнтĕрвăрри районĕ.

## Эпĕ – Çĕнтерӳçĕ салтаксен хĕрĕ



• СУЛАХАЙРИ – Ф.МЕДВЕДЕВ.

*Тӳпери çăлтăрсем,*
*Çĕнтерӳ çутисем.*
*Улăхри чечексем пек*
*Илемлĕ вĕсем.*
*Тав сире, аттесем,*
*Тав сире, аннесем.*
*Эпир – сирĕн*
*Çĕнтерӳ ачисем.*

**Ю.СЕМЕНТЕР.**

Ку аса илĕве çырма Н.Алексеевăн кăçалхи ака уйăхĕн 1-мĕшĕнче район хаçатĕнче пичетленнĕ «Манăçа кăларас марччĕ» статйи хистерĕ. «Вăрçă витĕр тухнă ветерансен аса илĕвĕсене, вĕсен ачисем каласа панисене» тенĕ сăмахсем чуна пырса тиврĕç. Ăна вуласа тухнă хыççăн хамăн аттепе анне умĕнче ĕмĕр парăмлă пулнине, вĕсемшĕн темĕн туса çитерейменнине ăнланса илтĕм. Эпĕ – хаяр вăрçă хирĕнчен Çĕнтерӳпе таврăннă салтаксен хĕрĕ. Хам пирки чăннипех те çакăн пек калама пултаратăп, мĕншĕн тесен манăн атте те, анне те мĕн вăрçă вĕçленичченех фронтра çапăçнă. Анне медсестра пулнă, атте, артиллерист, Калинин облаçĕнчен пуçласа Берлина çитнĕ, рейхстага штурмланă.

...1947 çул. Пуш уйăхĕн вĕçĕ.

– Килеççĕ, килеççĕ! – хавассăн кăшкăрса чупрĕ урамра выляса çӳрекен ача-пăча ял варринчи виçĕ чӳречеллĕ, тирпейлĕ йывăç çурт патнелле уй хапхинчен тулли лав килнине курса. Çакна илтсе пӳртрен çитмĕл çулсенчи хĕрарăм чупса тухрĕ, ун хыççăн – çула çитнĕ хĕрсем, мăнукĕсем... Пурте уй хапхинчен кĕнĕ лав енне тинкерсе пăхрĕç. Акă инçе çулра ывăннă лаша хапха умне çитсе чарăнчĕ те, ун çинчен 17-18 çулти маттур хитре каччă çăмăллăн сиксе анчĕ. Ун хыççăн лав çинчен 30-32 çулсенчи çӳллĕ те кĕрнеклĕ çар çынни анчĕ, мăшăрĕн аллинчен пĕчĕк ачине илсе кăкăрĕ çумне ачашшăн пăчăртарĕ. «Ну, Галина, тăван киле çитрĕмĕр вĕт», – тесе асламăшне тыттарчĕ. Настук аппа /ку манăн асанне/, юратнă ывăлĕ хаяр вăрçă хирĕнчен чĕрĕ-сывă таврăннипе ниçта кайса кĕрейми савăннăскер, пурне те пӳрте сăра ĕçме йыхравларĕ.

Ку хĕр пĕрчийĕ вăл – эпĕ, Галина, Германири Стендаль хулинче çуралнăскер, Лиза – манăн анне. Вăрçăра вăл аттене темиçе хут та вилĕмрен çăлса хăварнă. Атте – Федор, Çĕнтерӳ салтакĕ, артиллерист командир. Ăна вăрçă вĕçленсен тӳрех киле яман, вăл тата икĕ çул Германире хĕсметре тăнă. Çав вăхăтра аннепе пĕрлешнĕ, эпĕ çуралнă. 1947 çулта аякри Германирен Елчĕк районĕнчи Вырăскасси ялне çитме пĕчĕк ачапа пĕрре те çăмăл пулман. «Эх, Галина, миçе вакун айĕнчен йăтса тухман-ши эпĕ сана», – тетчĕ атте каярах час-час мана пуçран ăшшăн шăлса. Чи çывăх Канаш станцийĕ пирĕн ялтан 50 ытла çухрăмра вырнаçнă, унта пире илме лашапа аттен шăллĕ Илче тете пынă.

Манăн атте Федор Осипович Медведев 1915 çулта çуралнă. 1937 çулта ăна Хĕрлĕ Çар ретне илнĕ. Малтанах вăл Беларуç Çар округĕн 25-мĕш артиллери полкĕн взвод командирĕн пулăшаканĕ пулнă. Каярахпа, 1940 çулта, кĕçĕн командирсен курсĕнче вĕренсе килне таврăннă. Хаяр вăрçă пуçлансан Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕне никама пăхăнманлăхне хӳтĕлеме тӳрех фронта тухса кайнă. Стрелоксен Хĕрлĕ Ялавлă, Кутузов орденĕллĕ, Идрица-Берлин 171-мĕш дивизийĕнче взвод командирĕ, тупă батарея командирĕ пулса çапăçнă. Атте хăйĕн пурнăçĕнче пурнăçланайман пĕр ĕмĕтшĕн кăна кулянатчĕ – пĕвĕ 1-2 сантиметр çӳллĕрех пулманнипе кăна вăл 1945 çулхи Çĕнтерӳ парадне хутшăнайман. Вĕсен дивизийĕ рейхстага штурмланă çĕрте уйрăмах палăрнă: атте унăн стени çине хăйĕн хушаматне çырса хăварманшăн ӳкĕнетчĕ. Атте Балтика çĕршывĕсене, Польшăна ирĕке кăларнă çĕре хутшăннă. Вăрçăри паттăрлăхпа хастарлăхшăн I степень Тăван çĕршыв вăрçин орденне, Хĕрлĕ Çăлтăр орденне, «Паттăрлăхшăн», «Берлина илнĕшĕн», «Варшавăна ирĕке кăларнăшăн» тата ытти нумай-нумай медале тивĕçнĕ.

Вăрçă хыççăн атте тăван ялта 7-8 çул колхоз председателĕ, нумай çул ĕне тата чăхчĕп фермисен заведующийĕ, тивĕçлĕ канăва тухсан та темиçе çул хушши йĕтем çинче весовщикра ĕçлерĕ. Чун-чĕрипе чăн-чăн коммунист пулнăскер ялан тӳрĕ кăмăлпа ĕçлетчĕ, çитменлĕхсем çинчен куçран калатчĕ. Унпа пĕрле ĕçленĕ çынсем паян кунчченех ăна ырăпа çеç асăнаççĕ, унăн хастарлăхĕнчен, сăпайлăхĕнчен, тӳрĕ кăмăлĕнчен тĕлĕнеççĕ.

Анне Елизавета Медведева 1922 çулта Пушкăрт тăрăхĕнчи чăваш çемйинче çуралнă. Манăн кукаç Пушкăртри Иглино районĕнчи Ивано-Казанка ялне пуçарса яракансенчен пĕри пулнă. Эпĕ çав яла темиçе те кайса курнă, мана унта питĕ тараватлăн, ăшшăн йышăнатчĕç. Анне вунтăхăр çултах медсестрасен курсне пĕтерсе фронта тухса кайнă, нумай-нумай салтака, çав шутра манăн аттене те, хăрушă вилĕмрен çăлса хăварнă. «Эпĕ Лиза умĕнче ĕмĕр-ĕмĕр парăмлă», – тетчĕ атте час-часах вăрçă çинчен аса илсен. Аннен те медаль нумайччĕ. Хăйĕн ĕмĕрне вăл больницăсенче ĕçлесе иртерчĕ, 86 çулта пирĕнтен яланлăхах уйрăлса кайрĕ. Йăмăкăм Людмила Федоровна халĕ те Ĕпхӳре пурăнать. Вăл та ман пекех педагог, 2 хĕр çуратса ӳстерчĕ, вĕсем çемьеллĕ. Асли Лена нумаях пулмасть «Пушкăртстанăн çулталăкри чи лайăх учителĕ» ята тивĕçрĕ, Ĕпхӳре пĕр лицей директорĕнче ĕçлет.



• Е.МЕДВЕДЕВА.

Çемьере эпир 5 ача ӳссе çитĕннĕ, ытти йăмăксемпе шăллăм Шупашкарта пурăнаççĕ. Пурте аслă пĕлӳллĕ.

Атте 84 çула çитсен пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ. Ку маншăн пурнăçри чи пысăк çухату пулчĕ. Чĕрен пĕр пайĕ пушанмаллипех пушанса юлнине те туйрăм, аттене мĕн тери юратнине, маншăн вăл тĕнчери чи хаклă çын пулнине ăнланса илтĕм.

Юлашки вăхăтра хăшĕ-пĕри фронтра тата тылра çирĕп тăрса хамăртан темиçе хут хăватлă пулнă тăшмана çĕнтернĕ çынсен паттăрлăхне пĕчĕклетсе кăтартма тăрăшнине илтме те, курма та питĕ йывăр. Вĕсем, кашни сехетре вилĕмпе куçа-куçăн тăнăскерсем, уйăхĕ-уйăхĕпе çумăрлă, юрлă-пăрлă, 40-45 градус сивĕре окоптраншейăра шăннă. Киле таврăнса чуна çывăх тăванĕсене курасса, ăшă пӳртре çемçе те таса вырăн çинче выртасса ĕмĕтленме те пултарайман. Атте вăрçă участникĕсене паракан çăмăллăхсемпе те усă курма юратмастчĕ. «Манăн, тăван киле чĕрĕ пуçпа таврăннăскерĕн, юлнă вăрçă хирĕнче вилнĕ юлташсен ачи-пăчи, мăшăрĕсен куçĕнчен мĕнле пăхмалла?» – тетчĕ.

Атте ман валли пулас мăшăра та ялти чи маттур каччăсенчен хăй суйласа илчĕ. Эпир Кольăпа çирĕп çемье çавăрса 45 çул килĕштерсе пурăнатпăр. Тĕреклĕ кил-çурт çĕклесе 3 ача çуратса ӳстертĕмĕр, пурне те аслă пĕлӳ илме пулăшрăмăр. Ачамсемпе мăнукăмсем час-часах тăван киле килсе хуçалăхра пулăшаççĕ, тутлă кучченеçсемпе савăнтараççĕ. Мĕн кирлĕ тата пире, çитмĕле çывхарса пыракансене? Вăрçăсăр тăнăç пурнăç хуçалантăр çĕршывра. Эпĕ хамăн шăпампа питĕ кăмăллă, мана ытлашши нимĕн те кирлĕ мар: чапа та, лайăха та ăмсанмастăп, мулпа пуянлăха та хапсăнмастăп, çынна çисе каласма та юратмастăп. Атте çавăн пек вĕрентсе хăварнă...

**Галина КИРИЛЛОВА.**

Чăваш хĕрарăмĕ




1945-2015

ТĔЛПУЛУ

# «Мăян та тутлăччĕ пирĕншĕн»



**Юнкун, çу уйăхĕн 6-мĕшĕнче, Шупашкарти Чăваш наци музейĕнче вăрçă тата тыл ветеранĕсемпе ăшă тĕлпулу иртрĕ. Уявпа, Аслă Çĕнтерÿпе, саламланă хыççăн кашнинех асăнмалăх парнесемпе, йăм хĕрлĕ гвоздикăсемпе савăнтарчĕç. «Сударушка» ансамбль вăрçă юррисенчен концерт хатĕрленĕ. Вĕсемпе пĕрле ĕнерхи салтаксемпе медсестрасем те юрларĕç. Залра ларакан кĕмĕл çÿçлĕ аппасемпе пиччесен çак самантра куçĕ шывланчĕ. Хурланса, çав вăхăтрах савăнса йĕчĕç вĕсем, пирĕн хисеплĕ ветерансем, çĕнтерÿçĕсем!**

Концлагерьте асапланнă Элеонора Тимофеева каласа кăтартнине çÿçенмесĕр итлеме çук. Вăл ун чухне вуникĕ çулта, йăмăкĕ çиччĕре çеç пулнă. Ачаллах мĕн чăтнине, нимĕççем пĕчĕкскерсенчен епле кулнине куççуль витĕр каласа кăтартрĕ.

– Аттене пула сывă юлнă эпир. Вăл пире мĕн пĕчĕкрен кашни ир пулă çăвĕ ĕçтеретчĕ. Çулла гематоген çитеретчĕ. Организм пĕчĕккĕллех çирĕпленсе юлнă. Эх, тем те куртăмăр, мĕнпур курăка çинĕ эпир. Мăян та тутлăччĕ пирĕншĕн. Вилнĕ лаша какайĕ темиçе сехет пĕçерсен те çемçелместчĕ. Мĕскĕн анне: «Ачамсем, чăмлăр та сурăр, ан çăтăр», – тетчĕ», – аса илет асаплă çав кунсене Элеонора Алексеевна.

Концлагерьтен çăлăнса тухсан та нимĕн лайăххи те кĕтмен вĕсене. «Пĕр тăхтаса тăмасăр хĕвелтухăçнелле чупăр», – тенĕ вăйсăр та выçăскерсене. Чирлĕ, юхансуранлăскерсем Киров облаçĕнчи пĕр колхозра чарăннă. Пуйăспа, пăрахутпа аран çитсе пĕтнĕ унта. Çук, çул çитменскерсене кунта та пĕр кун та канма паман, тепĕр куннех уй-хире ĕçлеме илсе тухнă. Тĕрĕссипе, вĕсене госпитале вырнаçтармалла пулнă та… «Тифăн мĕнпур тĕсĕпе чирленĕ эпир. Халь те тĕлĕнетĕп, епле чĕрĕ юлнă-ши? Ачалăх мĕн иккенне пĕлместĕп, ăна фашистсем вăрланă», – куççульне шăлать Элеонора Тимофеева. Ашшĕн ăшшине кăшт çеç туйса курайнă ачисем – район ертÿçинче, преподавательте ĕçленĕ çывăх çыннине нимĕççем персе пăрахнă. Ун ячĕпе Ржев хулинче Асăну хăми те уçнă-мĕн. Элеонора Алексеевна 1970 çулта Тверь облаçĕнчен мăшăрĕпе куçса килнĕ кунта. «Юл Шупашкарта, мана унти халăх питĕ лайăх пек туйăнчĕ. Хамăр еннелле ан таврăн», – тенĕ ăна амăшĕ çĕре кĕрес умĕн. Вырăс хĕрарăмĕ Шупашкар хулине питĕ юратать, вăхăтĕнче чăвашла вĕренейменшĕн ÿкĕнет. Мăнукĕсене пирĕн чĕлхене вĕрентесшĕн çунать.

Ветерансене чысланă хыççăн Чăваш наци музейĕнче «Вăрçă плакачĕсем. Аслă Çĕнтерÿ çулĕ çинче» ятпа федераци куравĕ уçăлчĕ. «Тăван çĕршыв-анне чĕнет», «Тăшмана çĕнтеретпĕрех», «Эпир парăнакан халăх мар» плакатсем пирĕн халăх вăйлă, ăна нихăçан та çĕнтерме çуккине палăртаççĕ.

**Елена АТАМАНОВА.**

Автор сăнÿкерчĕкĕ.

МЕДИЦИНА МУЗЕЙĔ

# Шурă халатлă çĕнтерÿçĕсем



**Республикăри пин те пилĕкçĕре яхăн медицина ĕçченĕ Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă: 55-шĕ тăван киле таврăнайман, 17-шĕ хыпарсăр çухалнă. Федор Ашмаров санинструктор тата Зоя Парфенова медсестра Совет Союзĕн Геройĕ ята тивĕçнĕ.**

Автор сăнÿкерчĕкĕсем.

Тухтăрсене хушма пĕлÿ паракан институт çуртĕнче вăрçа хутшăннă медицина ĕçченĕсем çинчен каласа кăтартакан стендсем хатĕрленĕ, республикăри эвакогоспитальсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарнă. 1941 çулхи юпа уйăхне пĕр самантлăха таврăнас тăк çакăнта аманнисене вырнаçтарнине курнă пулăттăмăр. Медколледж тата университет студенчĕсем шăпах çав вăхăта сăнлама тăрăшнă: йăлтах – пурнăçри пекех. Сăмах май, Шупашкарти 3057-мĕш эвакогоспитальте 350 вырăн уйăрма палăртнă, çав вăхăтрах 400 кравать лартма май тупнă. Хирурги профильлĕ госпитальте операци блокĕнчен çын татăлман. 13 тухтăрпа 29 медсестра кунне-çĕрне пăхмасăр ĕçленĕ. Тылра сывлăх сыхлавçисем çитмен. Фронтовиксенчен нумайăшĕ сипленнĕ хыççăн каялла вăрçă хирне таврăннă. 1941 çулхи юпан 1-мĕшĕнчен пуçласа 1944 çулти утă уйăхĕн 1-мĕшĕччен эвакогоспитальте 5707 çынна медицина пулăшăвĕ панă. Донорсен юхăмĕ вăйланнине палăртса хăварас килет. 1943 çулта, тĕслĕхрен, 13058 çын юн панă. Çулталăк маларах çак йышра 3 пине яхăн çын çеç пулнă.

Медицина ĕçченĕсемпе – вăрçă тата тыл ветеранĕсемпе – республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, ЧР сывлăх сыхлав министрĕ Алла Самойлова тĕл пулчĕç.



"Эсир шкул ачисене, студентсене Çĕнтерÿ, паттăрлăх, чăтăмлăх çинчен каласа кăтартни çав тери пĕлтерĕшлĕ. Миршĕн кĕрешнĕ кашни çынна тав тăватпăр", – терĕ Михаил Васильевич ветерансене çывхарса килекен уявпа саламланă май. Çĕнтерÿ кунĕ тĕлне республикăри 1126 палăка йĕркене кĕртнине асăнса хăварчĕ вăл.

"Эпир те, çапăçу хирĕнчи шурă халатлă салтаксем, хамăртан мĕн килнине пурнăçланă: хăю çутипе операци тунă, пĕрремĕш пулăшу панă, суранланнисем валли хÿтлĕх шыранă, виçшер талăк аманнисем патĕнчен пăрăнман. Тахăш самантра хамăрăн та вăй пĕтсе çитнĕн туйăнатчĕ. Пурпĕрех çĕнтерĕве ĕненни хăват парса тăнă пире", – сăмах илчĕ вăрçă ветеранĕ, медицина службин старшини, республикăри психиатри больницин медсестри Нина Люкшинова. Совет Союзĕн Маршалĕ Константин Рокоссовский алă пуснă Тав çырăвне вуласа пачĕ вăл. Ăна, лара-тăра пĕлмен сывлăх сыхлавçине, аманнисем парне вырăнне сăвă халалланă. Çав йĕркесене халĕ те упрать хĕрарăм.

Герман Васильев Çĕрпÿри фельдшер училищинчен вĕренсе тухсанах фронта кайнă. Санитарсен взвочĕн командирĕ пулнă. Вăрçă хирĕнче пуля айĕнче çÿренине аса илчĕ 93-ри ветеран. "Мĕнле майпа чĕрĕ юлнă-ши ун чухне?" – тет халĕ тĕлĕнсе. 1943 çулта Герман Васильевича йывăр амантнă. Чылай вăхăт сипленме тивнĕ унăн.

Элĕк районĕнче çуралнă Гликерия Захарова вăрçă вăхăтĕнче Свердловскри çар заводĕнче ĕçленĕ. Тăван тăрăха таврăнсан хула 2-мĕш больницинчи хирурги уйрăмĕнче санитаркăра тăрăшнă.

Медицина наукисен тухтăрĕ, Чăваш Республикин наукăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, патшалăх премийĕн лауреачĕ Григорий Алексеев медицина музейĕн пĕлтерĕшĕ пирки сăмах хускатрĕ, çитес вăхăтрах çĕнĕ залсем уçасси пирки каларĕ.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

ЫЙТĂМ

# Йывăрлăхсене парăнтарма пулăшакан уяв

**Çĕнтерÿ кунĕнче çуралнă çынсем сахал мар. Вĕсемшĕн хăш уявĕ пĕлтерĕшлĕрех-ши? Çĕнтерÿ кунне уявланă май вĕсене çуралнă кунпа саламлама манмаççĕ-и? Çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче çуралнисене çак ыйтупа чăрмантартăмăр.**



**Аля ВОЛКОВА, "Хыпар" ИÇ набор операторĕ:**

– Тăвансем, çывăх çынсем, паллах, эпĕ çут тĕнчене Çĕнтерÿ кунĕнче килнине манмаççĕ. Саламлаççĕ. Маларах, тен, çак икĕ уяв та маншăн пĕр пĕлтерĕшлехчĕ-тĕр. Халĕ вара, çулсем иртнĕçемĕн, Çĕнтерÿ сумланать. Уйрăмах кăçалхи уява – Аслă Çĕнтерÿ 70 çул тултарнине – пысăк хавхаланупа кĕтетĕп. Яла каймасăрах парад курма та тухас тетĕп.

Пĕчĕк чухне эпĕ 1959 çулта мар, 1945 çулта çуралнă тесе шухăшлаттăм. Çавăнпах хама шеллеттĕм. "Вăрçă кĕрленĕ вăхăтра мĕнле çуралнă-ши? Мĕнле пурăннă-ши эпĕ?" – тесе шухăшлаттăм, айван. Майăн 9-мĕшĕ – Çĕнтерÿ кунĕ иккенне, эпĕ вара вăрçă чарăнсан чылай каярахпа çуралнине ÿсерехпе ăнлантăм. Халĕ шăпах 9-мĕшĕнче çуралнипе мухтанатăп та.

Çак куна уявлассишĕнех чăтăмсăррăн кĕтеттĕм теме çук. Çанталăк шăпах çак вăхăтра ăшăтнăран çĕрулми лартаттăмăр. Апла пулин те уяв – уявахчĕ. Кукамай арчинче упракан сахăрпа е пĕремĕкпе хăналатчех.



**Юрий РУБЦОВ, водитель:**

– Çĕнтерÿ кунĕ – пурте кĕтекен уяв. Маншăн та çаплах. Совет халăхĕ фашиста тĕп туни хам çуралнинчен пысăкрах пĕлтерĕшлĕ. Тус-тăван, юлташсем чи малтанах çуралнă кунпа саламлаççĕ пулин те ытларах Аслă Çĕнтерÿ кунне паллă тăватпăр. Ача чухне унăн пĕлтерĕшне чухламан-ха, ăнкаракан пулсан вăл чăннипех хаклă иккенне туйнă, тăван çĕршыва ытларах юратма, хисеплеме вĕреннĕ. Ачасене те майăн 9-мĕшĕн сумне ăнлантарса ÿстеретпĕр. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 70 çул çитни те хăйне евĕр пĕлтерĕшлĕ – манăн та пĕчĕк çавра çул.



**Надежда ЖИДКОВА, Етĕрне районĕнчи Кивĕ Тинкеш шкул библиотекарĕ:**

– Çак кун маншăн – хурлăхлă та, савăнăçлă та. Ватă кукаçи Давид Григорьевич Григорьев 1941 çулта Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пуç хунă. Ăна эпир ĕмĕр-ĕмĕр асра тытăпăр. Тавах, ытлă-çитлĕ пурăнатпăр. Çĕнтерÿ парачĕ хыççăн яланах манăн çуралнă куна паллă тума пуçтарăнасси йăлара. Çапах ахальтен мар çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче çут тĕнчене килнĕ эпĕ, апла тăк çĕнтерме çуралнă. Çак шухăш кирек мĕнле йывăрлăха та парăнтарма пулăшать.



**Вячеслав ПЕТРОВ, 25 çулта, Шупашкар райадминистрацийĕн пурăнмалли çурт-йĕр уйрăмĕн специалисчĕ:**

– Çĕнтерÿ кунĕ маншăн çуралнă кунран та хаклăрах. Унран пысăкрах уяв пулма та пултараймасть. Шăпах та çак кун çут тĕнчене килни пушшех хăпартлантарать. Çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче кашни çулах парада тухатпăр. Мĕнпур тăван пĕрле пухăнатпăр. Манăн мăн кукаçи те вăрçă хирĕнче выртса юлнă. Сăмах май, Елчĕк районĕнчи Таяпа Энтринчен 279 çын вăрçа тухса кайнă, вĕсенчен 100-шĕ каялла таврăнайман. Ветерансенчен паян пĕри çеç пурăнать. Вăл манăн асаттен тăван пиччĕшĕ – Василий Петрович Петров. Кăçал çулла 92 çул тултарать. Эпир ăна питĕ юрататпăр, унпа мухтанатпăр. Сывлăхĕ пултăрччĕ мучин! Пире тата савăнтарса пурăнтăрччĕ!

# Раççейре – пĕрремĕш хут: кĕçĕннисем те парада тухрĕç

**Аслă Çĕнтерÿ 70 çул тултарнине республика анлăн уявлать. Çу уйăхĕн 6-мĕшĕнче Шупашкарти «Çĕнтерÿ» мемориал комплексне ветерансемпе пĕрле çамрăк ăру пухăнчĕ.**

Малтанах Сÿнми Çулăм умне астăвăм ярăмĕпе чечексем хучĕç. Ун хыççăн ачасен пултарулăхĕн «Çĕнтерĕвĕн янăравлă сассисем» фестиваль пуçланчĕ. Çавна май 6-7 çулти ачасем парада тухрĕç. Ку Шупашкаршăн çеç мар, Раççейшĕн те пĕлтерĕшлĕ пулăм – вăл пĕрремĕш хутчен йĕркеленет. Кĕçĕннисем валли ятарласа çĕлетнĕ кадет, моряк, десант, МЧС, тинĕс пехотин тумĕсене тăхăнса уява пухăннисен умĕпе 700 ытла шăпăрлан утса иртрĕ. Хăйсене чыслăн кăтартма вĕсене ашшĕ-амăшĕ, педагогсем пулăшрĕç. Ахаль те чечек пек шăпăрлансем вăрçă çулĕсенчи илемлĕ тумпа пушшех капăр курăнчĕç. ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьевпа Шупашкар пуçлăхĕ Леонид Черкесов та çакнах çирĕплетрĕç.

Парада хутшăнакансене уявпа саламланă май Михаил Васильевич ачисене тăван çĕршыва юратма вĕрентсе ÿстерекен ашшĕ-амăшне тав турĕ.

Пĕчĕккисем хыççăн парада хулари тĕрлĕ шкулти çамрăк армеецсем тăсрĕç. Тĕрлĕ çар тумĕ тăхăннă яшсемпе хĕрсем чăн-чăн салтаксем пекех çирĕппĕн пусса иртрĕç.

– Канаш районĕнчи Виçпÿртре çуралнă эпĕ, вăрçă вăхăтĕнче колхозра тăрăшнă. Йывăр ĕçленĕренех аманса юлтăм та ача та çуратаймарăм. Арçынсем пурте вăрçа тухса кайнăран пирĕн, çамрăксен, пĕтĕм ĕçе хамăрăн пурнăçлама тиветчĕ. Эпир аннен 11-ĕнччĕ. Тете Курск пĕккинчи çапăçуран чĕррĕн тухайман. Пысăк çемьерен халĕ пурăнакансем виççĕн çеç юлтăмăр. Çамрăклăхăм çăмăл килмерĕ. Юрать-ха мăшăрăм лайăх пулчĕ. 55 çул пурăнтăмăр унпа, – тет уяв кăмăлне ветерансемпе пайлама килнĕ Роза Андреева.

Лидия Маркина та – вăрçă ачи. Етĕрне районĕнчи Тури Ачакра çуралса ÿснĕ вăл. Ашшĕ те, пиччĕшĕ те вăрçăран урасăр таврăннăран унăн та ытти пин-пин ача пекех пурнăç нушине сахал мар тутанма тивнĕ. Ултă ачаран пурăнаканни халĕ вăл пĕчченех ĕнтĕ.

– Пĕчĕклех тырă та вырнă, фермăра та ĕçленĕ эпир. Савăнса-выляса çÿреймен. Паян ачасем çине пăхатăп та çав тери савăнатăп, – тет Лидия Алексеевна.

Вера Михайловна Сызраньре çуралса ÿснĕ. Атăлçи тăрăхĕнчи çар чаçĕсен штабĕ шăпах унта вырнаçнă. Çавăнпах çар базисем те сахал мар пулнă ку хулара. Шăпах вĕсенчен пĕринче – 65430-мĕшĕнче – ĕçлесе пурăннă та Вера Ивановна.

1941 çулта вара çамрăк хĕрача Мускав çывăхĕнче окопсем чавнă. Амăшĕн каймалла пулнă-ха. Ултă ачаран чи кĕçĕнни тăваттăра çеç пулнăран ун вырăнне вунтăваттăри хĕрачи тухса кайнă. Хĕллехи сивĕре, пур-çук тумпа сакăр уйăх ĕçленĕ хыççăн чирлет çамрăк, çавăнпах ăна килне яраççĕ. Çавăн хыççăн вăл, имшер пулин те, станок умне тăрать. 40 килограмм таяканскер хăйĕнчен те йывăртарах детальсене якатать-майлать.

– Çĕнтерÿ кунне куççульпе кĕтсе илтĕмĕр. Çавăн чухлĕ чăтса ирттернĕ хыççăн халĕ те пурăннишĕн çав тери савăнатăп. Паян та станок умне тăраттăм, анчах куç курмасть, – тет вăл.

– Çĕнтерĕве епле кĕтсе илнине каласа кăтартатчĕç аттепе анне. Никам каламасăр, никам чĕнмесĕр вăрçă чарăннине илтнĕ çынсем парада тухнă евĕр пухăнса пурте çар чаçĕ патне утнă. Вăл кун кăштах çумăр çăватчĕ тет. Лачакине, йĕпине пăхмасăр купăспа ташланă-юрланă халăх, – калаçăва хутшăнать Вера Михайлова хĕрĕ Ольга.

Парад вĕçленсенех «Çĕнтерÿ сиренĕ» акци иртрĕ. Çак кун Шупашкарти тĕрлĕ кĕтесре 400 тĕм ытла лартрĕç. Пĕтĕм Раççейре иртекен акци пирĕн пата шăпах çак кун çитрĕ. Сирень – çуркунне, Çĕнтерÿ палли. Киле таврăнакан салтаксене 1945 çулта шăпах сирень çыххисемпе кĕтсе илнĕ. Çавăнпах çак кун сирень лартасси хăйне евĕр йăлана çаврăннă. Уяв программине малалла тăсса кадетсем бал ташшине тухрĕç. Вĕсем çемĕпе çаврăннă хыççăн «Вăрçă çинчен хайланă 70 юрă» фестиваль иртрĕ.

Çак кунах каçхи кÿлĕм Республика тÿремĕнче те уяв мероприятийĕсем йĕркелерĕç. Пĕтĕм Раççейре «Çĕнтерÿ кунĕ» акци иртнĕ май Шупашкарта пурăнакансем те çак юрра шăрантарма пухăнчĕç. Кунашкал мероприяти çак кун тăван çĕршывăмăрăн тĕрлĕ кĕтесĕнче иртнĕ.

**Татьяна НАУМОВА.**





Автор сăнÿкерчĕкĕсем.





### АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

## Симĕс сухан кукăлĕ



**10 çăмарта /4-шĕ – чуста çăрма, 6-шĕ – ăшне хума/, 7 апат кашăкĕ çăнăх, 1/2 чей кашăкĕ тăвар, 1/2 чей кашăкĕ апат соди, 200 грамм хăйма, 1 апат кашăкĕ майонез, симĕс сухан кирлĕ.**

Çăмартана пăтратса кăпăклантармалла, тăвар, хăйма, майонез, апат соди, çăнăх хушмалла. Пĕçернĕ çăмартана, симĕс сухана турамалла. Кукăль ăшне шĕвĕ чустапа хупламалла. Кукăле духовкăра пĕçермелле.

## Ирхи салат

**1 хăяр, 1 хĕрлĕ кăшман, 1 çăмарта, консервланă 2 апат кашăкĕ шалча пăрçи, петрушка, укроп, 1 апат кашăкĕ кедр мăйăрĕ, 1 апат кашăкĕ тип çу кирлĕ.**

Пĕçернĕ çăмартапа хĕрлĕ кăшмана теркăламалла. Петрушкăпа укропа вĕтетмелле. Хăяра пĕрчĕлесе турамалла. Çимĕçсене тип çупа пăтратмалла. Çиелтен кедр мăйăрĕ сапмалла.

## Какайпа, кăмпапа

**300 грамм чăх какайĕ, 200 грамм шампиньон, 2 кишĕр, пуçлă 1 сухан, тăварланă 3 хăяр, майонез, тип çу, тăвар кирлĕ.**

Чăх какайне пĕçермелле. Туранă кăмпана тип çупа ăшаламалла. Кишĕре теркăламалла. Суханпа хăяра вĕттĕн турамалла. Пахча çимĕçе кăмпапа пăтратмалла, юлашкинчен хăяр хушмалла. Çак хутăша 5-7 минут пăшăхламалла. Майонез хушсан тепĕр 5 минут пĕçермелле. Туранă чăх какайĕ ярсан 10 минутран çулăма сӳнтермелле. Ку салата ăшăлла çимелле.

## Кăлпассипе, куккуруспа

**Консервланă 200-шер грамм шалча пăрçи, куккурус, тĕтĕмленĕ 100 грамм кăлпасси, 1 пакет сухари, 1 шăл ыхра, майонез кирлĕ.**

Кăлпассие пĕрчĕлесе турамалла. Ыхрана вĕтетмелле. Çимĕçсене майонезпа пăтратмалла.

## Сухан катлечĕ

**Пуçлă 5 сухан, 2 çăмарта, тăвар, пăрăç, 2-3 апат кашăкĕ çăнăх, тип çу, укроп кирлĕ.**

**Соус валли 1 стакан шыв, 2-3 апат кашăкĕ кетчуп, укроп хатĕрлемелле.**

Вĕттĕн туранă сухана çăмартапа, тăварпа, пăрăçпа, çăнăхпа пăтратмалла. Хутăша çатмана апат кашăкĕпе илсе хумалла, тип çупа ăшаламалла.

Кетчупа 1 стакан шывпа пăтратмалла, вĕтетнĕ укроп хушса вĕретмелле. Катлетсене соуспа витмелле, 10 минут пăшăхламалла.

## Хăпарту

**300 грамм какай фаршĕ, пĕçернĕ 200 грамм макарон, пуçлă 1 сухан, 1 помидор, 3 çăмарта, 3 апат кашăкĕ майонез, сыр, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Сухана – çурма çаврашкан, помидора тăваткалласа турамалла. Фарша макаронпа, тăварпа, пăрăçпа пăтратмалла. Хутăша çатмана ямалла. Ун çине суханпа помидор хумалла. Çăмартапа майонеза пăтратса кăпăклантармалла. Хăпартăва çак хутăшпа витмелле. Çиелтен сыр теркăламалла. Хăпартăва духовкăра та, микрохумлă кăмакара та пĕçерме пулать.

## Çатмари пицца

**2 апат кашăкĕ хăйма, 1 çăмарта, 4 апат кашăкĕ çăнăх, 40 грамм сыр, 2 помидор, 150 грамм кăлпасси, тип çу, укроп кирлĕ.**

Кăлпассине пĕрчĕлесе турамалла. Хуппинчен тасатнă помидора вĕттĕн касмалла.

Çăмартана хăймапа, çăнăхпа пăтратмалла. Шĕвĕ чустана çатмана ямалла. Ун çине кăлпассипе помидор хумалла. Çиелтен теркăланă сыр сапмалла. Пиццăна хупăлчапа витсе 10-15 минут пĕçермелле. Сĕтел çине лартиччен вĕтетнĕ укроппа илемлетмелле.

## Суфле

**250 грамм тăпăрч, 1 çăмарта, 1 çăмарта шурри, 2 апат кашăкĕ сахăр, 1 груша, 1 банан кирлĕ.**

Çăмартапа тăпăрча миксерпа пăтратса кăпăклантармалла. Грушăпа банана тăваткалласа турамалла. Тăпăрча сахăрпа, улма-çырлапа пăтратмалла. Хутăша микрохумлă кăмакара 4 минут пĕçермелле.

### ЫЙТУ-ХУРАВ

# Çутă ӳкни – хăрушă мар

**Чăх-чĕп кăларма кăçал «Блиц» инкубатор туянтăмăр. Пур енлĕн усă курма пĕлейместпĕр пек туйăнать. Инкубатор хуппи – поликарбонатран. Ун витĕр çăмартасем çине çутă ӳкет. Çиелтен мĕнпе те пулин хуплама юрать-и? Е ку хăрушă мар-и?**

**И.МУЗЯКОВ,**
Вăрнар районĕ.

Çăмартасем çине çутă ӳкнинче нимĕн хăрушши те çук. Инкубатора чӳрече çывăхне çеç ан лартăр, ăна хĕвел пайăркисем тӳрремĕн ан лекчĕр. Унсăрăн инкубаторти температура кирлĕ виçерен хăпарса каять.



### ВУЛАКАН СĔНЕТ

# Ура шыçать

Ура шыçни организмра ытлашши шĕвек пуçтарăннипе тата юн çаврăнăшĕ пăсăлнипе сыхăннă. Сиплеве килтех пуçлама май пур. Шăк хăвалакан эмел курăкĕсенчен хатĕрленĕ чей ĕçмелле. Компресс тума 5 апат кашăкĕ сĕлĕ хăрпăкĕ, 4 апат кашăкĕ хăйма, 1 чей кашăкĕ пыл, 0,5 чей кашăкĕ лимон сĕткенĕ кирлĕ. Сĕлĕ хăрпăкне хăймапа хутăштармалла, унтан лимон сĕткенĕ, пыл хушса лайăх пăтратмалла. Çак хутăша урана сĕрмелле. 25 минутран кая мар тытмалла. Урана минтер çине хурăр. Компресс хыççăн ăшă шывпа çăвăр, тӳрех тăрса утма ан васкăр. Урана тепĕр 10-15 минут çӳлелле тытса выртни те усăллă.

### СЫВЛĂХ

# Ӳсен-тăранăн паха енĕсем

**Вĕлтĕрен** çӳçĕн усăллă, лĕкĕрен пулăшать. Юн пахалăхне йĕркене кĕртет.



**Чĕре курăкĕпе** юн пусăмĕ ӳснине сиплеме усă кураççĕ. Çавăн пекех вăл – лăплантаракан эмел те.

**Салтак тӳмипе** тĕрлĕ шыççа, сурана чӳхеççĕ. Юнăхнине, тăртаннине ирттерет, ыратнине лăплантарать.

**Армути** япаласен ылмашăвне лайăхлатать.

**Календула** вар-хырăм, пĕвер, мăкăль чирĕсенчен сиплен-ме, сурана ӳт илме пулăшать.

**Сар çип ути** вар-хырăм ыратнине ирттерет, лăплантарать. Хĕрелнине, юнăхнине сиплет.

**Мулкач курăкĕ пуç** ыратнине ирттерет. Хĕрарăмсен уйăх хушшине йĕркене кĕртет. Сурана ӳт илме, юн юхнине чарма пулăшать.

### УСĂЛЛĂ КАНАШСЕМ

## Курăк пыйтинчен

Курăк пыйти ернĕ ӳсен-тăрана супăнь тата кĕл шывĕпе шăвармалла.

1 литр шыва 100 грамм йывăç кĕлĕ ямалла та 48 сехет лартмалла. Тепĕр литр шывра 10 грамм хуçалăх супăнĕ ирĕлтермелле. Çак икĕ тĕрлĕ шыва хутăштармалла. Унпа пыйтă ернĕ ӳсен-тăрана куллен сирпĕтмелле. 10 кунран хурт-кăпшанкă текех курăнмĕ.

## Çĕпре – паха витамин

2 литр лĕп шыва кашăк вĕçĕпе типĕ çĕпре, 1/3 стакан сахăр ямалла. Ăшă вырăнта талăк тытнă хыççăн шыва сивĕтмĕше лартмалла. Чечексене шăварма çур стакан çĕпреллĕ шыва 1 литр тăррипе хутăштармалла. Çапла пĕр уйăх шăвармалла.

### ШУТА ИЛМЕ

# Инжир

**Аспирин вырăнне.** Инжирти эфир çăвĕсем юна йĕркере тытма пулăшаççĕ. Юн ан çăралтăр тесен уйăх тăршшĕ кунне пĕрер çырла çини те çителĕклĕ. Тепĕр уйăх тăхтасан çырлана каллех çимелле.

**Пуç мимине те ĕçлеме пулăшать** вăл, çавăнпах ăс-хакăл ĕçĕнче вăй хуракансен тата творчество çыннисен ку çырлапа сăйланмаллах.

**Температура хăпарсан, пыр шыççан,** çăварта инфекци аталансан, ӳслĕк аптратсан 1 апат кашăкĕ вĕтетнĕ çырлана 2 стакан вĕри шыва ярса пĕчĕк çулăм çинче 10 минут вĕретмелле. Сивĕнсен сăрăхтармалла та кунне тăватă хутчен ĕçмелле.

**Ыванниине, вăйран кайнине, вĕчĕрхеннине ирттерет.** 4-5 çырлана 1 стакан вĕри сĕте ямалла. Кăштах ларнă хыççăн инжире тӳмелле. 2-4 хутчен ĕçсе çимелле.

**Шăк хăмпи ыратсан, шăнсан** 3-5 çырлана 200 миллилитр вĕри шыва ярса пĕчĕк çулăм çинче 5 минут вĕретмелле. Çырлана тӳмелле. Кун каçа апатран уйрăм çимелле.

**Çирĕплетекен салат.** Ăшаланă çăмарта е бутерброд вырăнне инжир салачĕ çисен хырăм та часах выçмĕ, чĕрене те ĕçлеме çăмăлрах пулĕ. 300 грамм инжир, 150 грамм хура слива, 2,5 апат кашăкĕ миндаль, 1 стакан кĕвĕлнĕ сĕт, апельсин хуппи кирлĕ. Çимĕçсене вĕтетмелле те кĕвĕлнĕ сĕтпе пăтратмалла.

### ПАХЧАÇĂ КĔТЕСĔ

# Чĕрĕ карта



Чĕрĕ карта тытма ытларах йывăççем, тĕмсем лартаççĕ. Сайра хутра ку тĕллевпе пĕр çул ӳсекен ӳсен-тăранпа та усă курма пулать.

Чĕрĕ карта çилрен, выльăх-чĕрлĕх кĕресрен сыхлать кăна мар, вăл илемĕпе те савăнтарать, тухăç та кӳрет. Сăмахран, палан, пилеш, катăркас, торн, шăлан, хурлăхан, сырлан çырлисемпе паха. Хăва лартакан унăн хуллипе карçинкка çыхма усă курать. Хăвана хулăсене пĕр-пĕринпе яваласа, сивĕтлесе илемлетсе те ӳстерме пулать.

Картана пахча йĕри-тавра çеç мар, варринче те лартма юрать. Кун пек вăл ăна темиçе пая уйăрать.

Чĕрĕ карта тытма çавăн пекех тĕрлĕ çĕр çинче акаци, айва, барбарис, хурама, граб /хурăн йышши йывăç/, чăрăш, ирга, вĕрене тата ытти йывăç лартма пулать. Ăна темиçе яруслă та йĕркелеме май пур.

Çӳллĕ ӳсекен пахчаçимĕç те, сăмахран, хĕвелçаврăнăш, куккурус, ку тĕллеве аван пурнăçлаççĕ.

Катăркасран, чăрăшран, туяран тунисем чи вăрăм ĕмĕрлисем шутланаççĕ. Илемлĕ тăвас тесен, паллах, хăвăрт тата явăнса ӳсекен чечексемпе усă курмалла.







# Снайпер

**Ленинград аш-какай комбиначĕн амбулаторийĕн телефонĕ шăнкăртатсан тăтăшах Мария Ткалича ыйтнине унта ĕçлекенсем хăнăхнă ĕнтĕ. Мария Алексеевна рентгенолог пулнă. "Кошкина юлташа телефон патне чĕнме юратьши?" – "Эсир фронтра пĕрле çапăçнă пулĕ-ха", – хĕрарăма хĕр чухнехи хушамачĕпе ыйтнинчен паллă пулнă, ахăр, ку. "Çапла, чухларăр". – "Юрать, халех калăп".**

## *Эх, çамрăклăх*

...Ленинградри С.М.Киров ячĕллĕ аш-какай комбинатне вăл пĕрремĕш хут 1939 çулта пынă. 18 çулти чăваш пики капиталлă строительство уйрăмне ĕçе вырнаçнă. Штукатурта вăй хунă. Общежитире пурăннă. Çамрăклăх – çамрăклăхах: хĕр тантăшĕсемпе пĕрле парка уçăлма çӳренĕ, каç пулсан ташă каçне васканă. Ытти чиперук пекех тĕкĕр умĕнче ытларах тытăнса тăнă – кĕпе вырнаçуллă-и, çӳçе чиперех пуçтарнă-и?..

Пĕррехинче клубра лекци иртнĕ. Шăпах çавăн чухне финсене хирĕç хĕрсем те çапăçнине пĕлнĕ Мария. Вĕсем пуля шăхăрнине пăхмасăр аманнă салтаксен суранĕсене çыхни, вĕсене çапăçу хирĕнчен илсе тухни ăна тĕлĕнтерсех янă. "Эпĕ вара çапла тума пултарăттăмччĕ-и?" – тӳрех ыйтнă хăйĕнчен вăл.

Çак ӳкерчĕк унăн асĕнче нумайлăха йĕр хăварнă. "Тен, манăн та, вĕсем пекех, сандружинницăсен кружокне çырăнмалла?" – лăпланма пĕлмен пĕр пăлханнă чĕре. Çапла вăл Хĕрлĕ Хĕрес Обществине кайнă. Чăваш хĕрĕн хăй илтнĕ пикесенчен юлас килмен.

Медсестрасен курсне эрнере икĕ хутчен пухнă. Ĕç хыççăн. Марийăна унта питĕ килĕшнĕ – занятисем пӳлĕмсенче кăна мар, уçă вырăнта та иртнĕ. Хĕрсене "аманнисене" тупма хушнă. Вĕсене вара йĕплĕ тĕмĕ хыçĕнче те, шурлăхра та, шăтăк-путăкра та шырамалла пулнă. "Вăрçăра та çакăн пекех пулĕ", – шухăшланă Мария.

## *Вăрçа – хăйĕн ирĕкĕпе*

Мария фронта Мускав районĕн хăйсен ирĕкĕпе йĕркеленнĕ халăх ополчени дивизийĕнчен лекнĕ. Çапăçăва разведка ротин санинструкторĕнчен пуçланă. Пĕр çапăçуран кăна хĕр 15 салтака илсе тухнă.

Мария хăй те кĕтмен çĕртен чапа тухнă. Пĕррехинче вăл разведчиксене ăна та хăйсемпе пĕрле илме йăлăннă – лешсем засадăна пуçтарăннă. "Тен, кама-тăр амантĕç те вырăнтах пулăшма пултарăп", – палăртнинчен чакман вăл. Ӳкĕте кĕртнĕ вĕт. Хĕре пĕрле пыма ирĕк панă. Тул çутăлас умĕн çула тухнă ушкăн. Инçех те каяйман... тăшман çине пырса кĕнĕ. Пирĕн разведчиксем, Кошкинăна шутламасăр, 6-ăн пулнă, тăшман – 15-ĕн. Пĕрремĕш пульăсемех тăшманăн 3 салтакне йăвантарнă. Ыттисем хирĕç пеме тытăннă. Анчах та вĕсем ăçталла тĕллемеллине те ăнкарман, çавăнпах пирĕннисем аманман та. Анчах тăшман часах тăна кĕнĕ. Йывăр та тан мар çапăçу пуçланнă. Акă пирĕн разведчиксенчен пĕри юлашки хут йынăшса янă. Кошкина пĕр шухăшласа тăмасăр унăн винтовкине ярса илнĕ. Çапла чăваш хĕрĕ пĕрремĕш хут тăшмана тĕллесе пеме пикеннĕ. Пуçламăшĕнчех ăнăçнă – тӳрех лектернĕ.

## *"Эпĕ те..."*

Тен, çакă та Кошкинăн вăрçă биографине курăмлă витĕм кӳмĕччĕ-и? Çаплах иртсе каятчĕ-тĕр... Анчах та Мария аллине "Комсомольская правда" хаçат çакланнă. Унăн пĕрремĕш страницинчех чăваш пики çине çĕр-çĕр фашиста тĕп тума ĕлкĕрнĕ Людмила Павличенко снайпер йăл кулса пăхса ларнă. Туйăмĕсене пăхăнма хăнăхнă Кошкина тӳрех картса хунă: "Павличенко пек пулатăп!"

– Куçăм умĕнчех юлташсем вилетчĕç... Шухăшăм кунсерен çирĕпленсе пычĕ – медичка кăна пулни çырлахтармасть мана. Çук, çырлахтармасть! Çав нимĕç тата...

1941 çулхи утă уйăхĕн вĕçĕнче совет зенитчикĕсем тăшман самолетне персе антарнă. Кингисепп тăрăхĕнче пулчĕ ку. Аманнă летчика, парашютпа сикнĕскерне, пирĕннисем тыткăна илнĕ. Ăна пирĕн медсанбатра сиплерĕç. Вăл хăйне ытла та сĕмсĕррĕн тыткалатчĕ, чаплă та тутлă апат-çимĕç кăна ыйтатчĕ. Ленинграда кĕçех хăйсем йышăнасса калатчĕ. "Нихăçан та! – чăтаймарăм, кăшкăрса пăрахрăм эпĕ. – Нихăçан та, илтетĕн-и, эпĕ хам, хамăн аллăмпа сан пеккисене тĕп тума пуçлатăп!" – аса илнĕ каярахпа Мария Кошкина.

Кĕçех тата тепĕр хаçат унăн аллине çакланнă. Унта Смолячков çинчен çырса кăтартнă. Пуçра пĕрре тĕвĕленнĕ шухăш тата ытларах çирĕпленнĕ кăна: "Тен, эпĕ те пултаратăп?" Шухăш кунсерен хĕмленсех пынă. Мария хăйне çине тăрсах снайперсен курсне вĕренме ямашкăн ыйтнă. Юлташĕсем пулăшнипе вăл кĕске вăхăтрах ăсталăха алла илнĕ. Мария Кошкина Ленинград фрончĕн чи пĕрремĕш хĕр снайперĕ пулнă.

## *Пĕрремĕш...*

Хĕре снайпер пулма питĕ килĕшнĕ. Хăйне оптика прицелĕллĕ винтовка шанса панăшăн мăнаçланнă та вăл. 1942 çулхи сивĕ чӳк уйăхĕн 18-мĕшĕнче вăл позицие пĕрремĕш хут тухнă. Унпа пĕрле опытлă снайпер Егоров пулнă. Сивĕ çĕр çинче кунĕпех тенĕ пек выртнă вĕсем. Егоров пĕр нимĕçе тĕп тунă, Марийăна ăнăçман-ха. Шăнса кӳтнĕскер, пĕр тăшмана та вĕлерейменскер иккĕленмех пуçланă – тĕрĕс тунă-и-ха вăл снайпера вĕренсе, тен, унран, нимĕн те пиçмест? Старшина хĕр кăмăлне тӳрех тавçăрнă.

– Чăтăмлăх, Маруся, – пăшăлтатнă вăл. – Тăшман санăн аллуна хăех сикмест... Чăтăмлăхсăр нимĕнле снайпер та пулмĕ санран.

Тавралăха каç чатăрĕ хупланă. Шăп çак самантра Мария хăйĕнчен 130-150 метрта тăшман салтакĕ чупса иртнине асăрханă. Тĕлленĕ. Винтовка сиксе илнĕ. Нимĕç лапах ӳкнĕ. "Вĕлертĕм-ши? – канăçсăрланнă хĕр. – Çук пуль... Ытла хăвăрт ӳкрĕ. Вилни майĕпен йăванать. Ку пытанчĕ кăна курăнать". Каллех ăнăçсăрлăх!

Тата çур сехет иртнĕ. Каллех нимĕç курăннă. Хальхинче Мария тата лайăхрах тĕлленĕ. Тинех! Тавăру шучĕ пуçланнă! Çĕр пӳрте хĕр хăпартланса таврăннă. Çак кунран пуçласа вăл тул çутăлма пуçласан позицие тухнă та сĕм çĕрле кăна каялла таврăннă.

Мария малти линие кунсерен тенĕ пек тухнă, кашнинчех ăнăçупа таврăннă. Вăл вĕлернĕ тăшман шучĕ ӳссех пынă, унпа пĕрлех – чăваш хĕрĕн чапĕ те.

Дивизи "Çĕнтерӳшĕн" хаçачĕн яваплă секретарĕ И.М.Альбац снайпер юхăмне аталантаракансем – Петр Дятлов тата Мария Кошкина – çинчен фронт пичечĕ валли статья çырнă.

1942 çулхи раштав уйăхĕнче – çак вăхăталла унăн 2 эрне опыт пулнă – хĕре дивизири снайперсен 2-мĕш слетне чĕннĕ. Мария çаплах вăтанчăк пулнă-ха. Хăйне мухтанине илтсен нар пек хĕрелнĕ. "Çакăн пек черченкĕскер мĕнлерех хăрушă ĕç пурнăçлать", – шухăшласа илнĕ, ахăр, нумайăшĕ çак вăхăтра.

Анчах çапăçу хирĕнче хĕр паттăрлăхпа палăрнă. Малтанхи профессийĕ пирки те манман вăл – аманнисене яланах пулăшнă, суранĕсене çыхнă, хăрушсăр вырăна илсе тухнă.

## *Маша-Кушак*

1942 çулхи раштавăн 3-мĕшĕнче хаçатра статья пичетленнĕ: "Мария Кошкина 15 фашиста тĕп тунă". 3 уйăхранах лару-тăру улшăннă: 46... Çапăçури паттăрлăхшăн совет патриоткине Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланă.

Тĕл перекен хĕр çинчен хыпар тăшман хушшинче те сарăлнă. Нимĕç снайперĕсем ăна тытма ятарласа "сунара" тухнă. Кошкинăна орденпа чысланине пĕлсен пирĕн салтаксен еннелле: "Машка-Кушака /нимĕçсем чăваш хĕрне хăйсен хушшинче çапла ят панă/ тытатпăр та кĕлетки çинче çăлтăр касса кăларатпăр!" – тесе кăшкăрнă.

Нимĕçсем унран хăранă. Вĕсем ун пирки мĕн шухăшлани те кĕçех уçăмланнă. Пĕррехинче пирĕннисем разведкăран "чĕлхепе" таврăннă. Машăн ăна пĕр вăхăт хураллама лекнĕ. Тăна кĕрсен нимĕç хĕрпе калаçу пуçарнă.

– Эсĕ кам?

– Мария Кошкина.

– Пулма пултараймасть! Сирĕн Машка-Кушак – во! – нимĕç аллипе хăлаçланса темĕн пысăкăш çынна евĕрленĕ. – Куçĕ вара унăн – во! – хальхинче бинокль пек тытнă вăл пӳрнисене.

Маша кулса янă. Тĕрĕссипе вăл пĕрре те улăп евĕр пулман-çке, пачах урăхла: пĕчĕк, хытанка, çап-çамрăк... Вăт утма вара вăл кушакран та çăмăлрах хускалнă-тăр, куçĕ те питĕ çивĕч пулнă.

Çак калаçăва илтсен разведчиксем те кулнă кăна. Вĕсем Машăна хăюлăхшăн, ырă кăмăлĕшĕн хисепленĕ.

1943 çул çитнĕ. Фронт хаçатĕнче Илья Эренбург статйи пичетленнĕ: "...нумай чăтрăмăр, нумай çухатрăмăр... Анчах та чи хăрушă кунсенче те ĕненĕве çухатмарăмăр. Раççее пĕтерме çуккине эпир яланах пĕлсе тăнă, чăнлăха пĕтерме çук.

Нимĕç çулталăк каяллах Ленинграда илме ĕмĕтленетчĕ. Хăйсен умĕнче алăксем яри уçăласса кĕтнĕ вĕсем. Ленинград чĕри мĕнне пĕлмен вĕсем. Вĕри юнпа çăвăнаканскер гранитран та çирĕпрех вăл. Виççĕр пин нимĕç хула таврашĕнче çĕрет, нимĕç пысăк пĕр хули – çĕр айĕнче...

Çĕнĕ çул ячĕпе сире, Ленинграда хӳтĕлекенсем. Салам сире, чаплă снайперсем Дьяченко, Антонов, Мария Кошкина!"

## *Вĕрентекеншĕн*

1943 çул пуçламăшĕнче Мария хурлăхлă хыпар илтет – Совет Союзĕн Геройĕ Феодосий Смолячков, снайпер юхăмне пуçланăскер, позицирен таврăнайман. Çав вăхăталла хастар комсомолец 125 фашиста тĕп тума ĕлкĕрнĕ. Çав паттăра хĕр нихăçан та курман, анчах та хăйне унăн вĕренекенĕ тесе шухăшланă. Хĕр тăшмана тата хаяртараххăн тавăрма тупа тунă. Вăл тĕп тунă фашистсен шучĕ кунсерен ӳссех пынă. Хĕр снайпер çинчен фронт хаçачĕсем çырсах тăнă.

1943 çулхи пуш уйăхĕн 15-мĕшĕнче Мария 85-мĕш фашиста тĕп тунă. Ку унăн юлашки "трофейĕ" пулнă. Çав кунах ăна сылтăм куçран йывăр амантнă. Текех снайпер пек çапăçайман вăл, анчах та фронтран кайман – разведкăна çӳренĕ, аманнисене пулăшнă. Çапла тепĕр çул иртнĕ.

1944 çулхи пушăн 6-мĕшĕнче разведчиксене "чĕлхе" тытса килме хушнă. Псков çывăхĕнче пулса иртнĕ ку. Марийăпа тепĕр разведчика вырăнта хăварса тăваттăн тăшман енне шунă – юлнисен каярахпа вĕсене таврăнма май туса памалла пулнă. Çак вăхăтра нимĕçле кăшкăрни илтĕнсе кайнă – разведчиксене асăрханă. Тăшман çурăлакан пульăсемпе пеме пуçланă. Марийăна та алăран лектернĕ. Çапла вĕçленнĕ чăваш хĕрĕн фронтри мухтавлă çулĕ. Анчах та пуçĕпех сывпуллашма васкаман-ха вăл, ăсталăха юлташĕсене вĕрентнĕ. Кошкинăшăн унăн юратнă вĕренекенĕсем тавăрнă – вĕсем снайпер винтовкисемпе позицисене тата тăтăшрах çӳреме пуçланă, тĕп тунă тăшман шутне кунсерен ӳстерсе пынă.

* * *

Унтанпа нумай çул иртнĕ. Мария Кошкина /Ткалич/ хĕсметре тăнă çар чаçĕнче ăна асрах тытнă. Унран тĕслĕх илме вĕрентсе çамрăксене Мария çинчен тăтăшах калакала кăтартнă. Пĕррехинче ветерана чаçе чĕнсе илнĕ.

– Питĕ пăлхантăм, – аса илнĕ каярахпа Мария Алексеевна. – Хам таса казармăсем тăрăх çӳретĕп, шухăшăм вара инçетре, çапăçу хирĕнче... Каярахпа пăлханмалли тата тупса пачĕç мана – вăрçăра мĕнле пенине кăтартма ыйтрĕç. Анчах та эпĕ винтовкăна чĕрĕк ĕмĕре яхăн алла тытман вĕт! Малти линие "ĕçе" тухнă чухне те капла пăлханман-тăр... Çамрăксен умĕнче намăс курас килмест вĕт-ха. Пурте куç илми сăнаççĕ мана. Маншăн пăшăрханаççĕ те пек туйăнать. Хирĕçлеймерĕм ĕнтĕ... Акă пĕрре перетĕп, тепре... Йăлтах тĕл лекни уçăмланать. Алă та, куç та йăлтах астăваççĕ иккен.

**/Г.Д.Кривичăн "Женщины – снайперы Ленинграда" кĕнекинчен/.**

**Тутарстанри Алексеевски районĕнчи Чăваш Майни ялне хăнасем тăтăш çӳреççĕ. Чăваш Енрен сумлă делегаци уйрăмах йышлăн килет кунта. Хăнасене чи малтанах вырăнти шкулта йĕркеленĕ таврапĕлӳ музейне илсе каяççĕ. Тăван халăх тумтирĕпе, йăлари япаласемпе паллашма пулать унта. Çак ялта çуралнă паллă снайпер Мария Кошкина паттăрлăхĕ çинчен каласа кăтартакан ятарлă кĕтес уçнă. Хăюлăхĕшĕн Хĕрлĕ Çăлтăр орденне, III степень Мухтав орденне, нумай медале тивĕçнĕ хĕре поэтсем сăвăсем халалланă.**



КĔНЕКЕ ÇЎЛĔКĔ

# Камăн кама пулăшмалла?

## Улькка Эльменĕн «Упраймарăм сана...» романĕ пирки çуралнă шухăшсем

«Упраймарăм сана...» хайлав – хĕрарăм шăпине кăтартакан роман. Унта тахçанхи истори те, паянхи политика та çук. «Этемĕн виçĕ тĕрлĕ хуйхă тенĕччĕ пĕр ăсчах: пĕрремĕшĕ – çывăх çын пурнăçран вăхăтсăр уйрăлса кайни, иккĕмĕшĕ – сыватма çук чирпе асапланни, виççĕмĕш – хăв хыççăн ăру хăварайманни. Ытти йывăрлăхсем, ума сиксе тухнă ыйтусем – вăхăтлăх, вĕсене татса пама, тунă йăнăшсене тӳрлетсе малалла пурăнма вăй-хал тупмалла çеç» /171 ен/. Çак ыйтусем тавра çаврăнать романра ĕç-пуç. Романăн икĕ кĕнеки те чирпе вилĕм тавра çаврăнать, икĕ кĕнекинче те икĕ ача амăшĕ Маша /Мария Савельевна/ пурнăçа тĕрĕс-тĕкел тăсас тесе кĕрешет. Кĕрешет те çĕнтерет.

Хальхи вăхăт, паянхи кунсем. XXI ĕмĕр пуçламăшĕнчи пăтранчăк пурнăç. Юрату, уйрăлу, курайманлăх, элек, ĕçсĕрлĕх, эрех, вилĕм, масар... Çырса пани – йăлтах чăваш ялĕн пурнăçĕнчен. Çакнах Людмила Сачкова, Юлия Силэм, Лидия Сарине, Николай Симунов, Сергей Павлов, Василий Петров, Николай Максимов, Геннадий Максимов кĕнекисенче те куратпăр. Паллах, кашнин курăмĕ – расна, хăйсене майлă.

«Упраймарăм сана» тени хайлавра теçетке хут тĕл пулать: Маша ашшĕ вилсен, упăшки вилсен, хуняшшĕ вилсен хурланма пуçлать те, кайран упăшкипе хĕрĕн тăпри çинче тек-текех «хамăрахамăр вилĕмсĕр тесе алхасатпăр-ши» тесе пăшăрханать. Упăшкине çухатнăшăн Маша тăршшĕпех хăйне айăпа хурать. Тĕрĕссипе унăн мар, лешĕн ăна упрамаллаччĕ. Пур упраканĕсем – хуняшшĕ Павел Григорьевич, çирĕп кăмăллă, тӳрĕ чунлă фронтовик. Вăл ырăпа усала пурнăçра пайтах курнă, çавăнпа тĕрĕс чунлă, таса кăмăллă кинне инкек-синкекрен хӳтĕлесе тăрать. Район сыватмăш тухтăрĕ Олег Петрович, салтакран аманса таврăннă Сергей, райадминистраци пуçлăхĕн çумĕ Николай Иванович Мария Савельевнăна килĕштереççĕ, унăн ăшă кăмăлне, ĕçри хастарлăхне хаклаççĕ. Тăршшĕпех таптаканĕ те сахал мар – тус вырăнĕнче çӳрекен Инна, районти вĕрентӳ департаменчĕн ертӳçи Инесса, упăшкин пиччĕшĕ Витя...

Тăлăха юлнă Мария Савельевна чунĕнче вут çунать пулин те хăйне килте, ял çинче, ӳнер шкулĕнче /вăл унта директор/ çирĕп тытать. Кăткăс унăн шалти, чунри пурнăçĕ. Упăшки йĕркеллĕ çынах пулман - ĕçнĕ, ют хĕрарăмсемпе явăçнă, хĕненĕ. Юлашкинчен юсанма пуçланă пек калаçнă, ĕмĕтленнĕ /ĕçке ернĕ çынсем хăпартланма юратаççĕ/, анчах машинăпа çапăнса вилнĕ. Çав юлашки шанчăк – упăшки юсанса çын пулма пуçлани Маша чĕринче сӳнми туйăм хурса хăварнă. Çавăнпах ĕнтĕ вăл ăçтиçук пулнă упăшкине манса каяймасть, хăйне кăмăлласа пăхакан, хӳтте илес текен арçынсене сире-сире ярать.

Мария Савельевна художницăн пурнăçĕ ачаранах йывăр. Тăлăх ӳснĕ вăл, тăлăх арăм пулса юлчĕ. Хитрескер /«Нарспи тесе чĕнетчĕç ăна»/, ăслăскер, кăмăллă та пултаруллăскер, çăмăлттай пулсанах хурлăхпа нуша айĕнче асапланмалла мар пек ĕнтĕ. Чăн та, хăй алай тесенех ăна алă çинче çĕклесе çӳрес текен тата чăнах та çĕклеме пултаракан арсем пур. Анчах – чун туртмасть, ăш выртмасть.

Сирсе ярать вăл вĕсене. «Çулсем иртсен пĕлчĕ Сергей хĕрача хăйĕнпе мĕншĕн сиввĕн калаçнине. Унăн амăшĕпе Маша ашшĕ туслă пулнă иккен. Анчах Савелий Сергей амăшне мар, Маша амăшне качча илнĕ».

Аслашшĕсемех – Кĕлмĕç Йăванпа Пуян Кĕркури – хирĕçӳллĕ пурăннă-мĕн. Машăн ашшĕпе амăшĕ ир вилнĕшĕн Сергей амăшне айăплаççĕ. Ун пек килйышри каччăпа çӳреме пултараймасть Маша. Акă сире Ромеопа Джульеттăн паянхи чăвашла тĕслĕхĕ!

Ытти арçынсене сирме те хĕрарăмăн сăлтав сахал мар. Кашнин хăйĕн хури-шури.

«Чылай йăнăш турĕ Маша пурнăçра. Пурăнма пĕлмерĕ. Хăйне кӳрентернине шăппăн тӳссе ирттерсе ăшĕнче хăй тĕллĕн, пĕччен асапланса пурăнчĕ. Упăшки хĕнени, сăмахпа кӳрентерни ăна пусарса-путлантарса пырса хăйне хисеплеме пăрахтарчĕ. Чуна пăрлантаракан сивĕ те хаяр сăмахсене çулсерен шăппăн итлесе пурăнни ăна çынсенчен уйăрчĕ. Вăл чун-чĕрине çăрапа питĕрсе илчĕ тейĕн: никама пĕр сăмах каласа пама именсе – килти çӳпçапа урама кăларма хушманçке-ха – çĕрлесерен шăппăн йĕчĕ. ... Хăйне ниме юрăхсăр, айван, «çăкăра усăсăр çĕртсе пурăнакан» çын пек туйма пуçларĕ» /259 с./. Çакна хăй тĕллĕнех ăнланса илнĕ Мария Савельевна куçĕ уçăлать. Петĕрпе Кирила, ывăлĕсене, ӳстерсе ăсатнă хыççăн ăраскал ăна ырă та йĕркеллĕ çынпа, ӳнер шкулне хуларан куçса килнĕ ентешĕпе Сергей Васильевичпа, çывăхлатать. Ку юрату та пуçланнă-пуçланман ним мар арканса каятчĕ. Машăна ĕçкейĕ /упăшкин пиччĕшĕ/ Витя ыталанине курсан Сергей Васильевич кӳреннипе эрнелĕхех хулана тухса каять. Çапла нĕрсĕр пулса тухнишĕн пăшăрханнипе Маша чирлесе ӳкет. Çапах та текех айăпли пулма килĕшмест – хăй чунтан килĕштерсе пăрахнă çын патне тĕрĕс сăмаха калама, чăннине ăнлантарса пама каять.

Романра ĕçсем темиçе йĕрпе пулса пыраççĕ. Кӳршĕ-аршă, паллан-пĕлен çемьесем мĕнле пурăнни унта уççăн ӳкерĕннĕ. Машăна çавăрайман яшлăхри Сергейĕн пĕрремĕш арăмĕ Алена /генерал хĕрĕ/ упăшки сусăрлансан урăх арçынпа тухса тарать. Вĕсем самолет ӳкнипе вилеççĕ. Иккĕмĕш арăмĕн хĕсĕр Людăн /Сергее пула хĕр чух хырăм пăрахнăскерĕн/ асапĕ темĕн чухлĕ. Малтанхи арăмĕн Сарра ятлă хĕрĕ /Сергей хăй те пĕлмесĕр пурăннă ачи/ ашшĕ патне таврăнни нушаллă йыша пысăк телей кӳрет.

Район ертӳлĕхĕнче ĕçлекен Соловьевсем – Николай Ивановичпа Инесса Всеволодовна – ӳнер шкулĕнче вĕренесшĕн пулман Димине пула пĕри Мария Савельевна майлă, тепри хăр-хаяр хирĕç пулса тăраççĕ, ĕçре пăтранса пĕтеççĕ.

Олег Петрович тухтăрăн арăмĕ йăлара вĕçерĕнсе каять те çемьене аркатать. Мулшăн хыпăнсах ĕмĕрне пăсса янă Витьăн нĕрсĕрлĕхне тек чăтаймасăр арăмĕ Света ашшĕ-амăшĕ патне таврăнать, вара лешĕ ӳсĕр-пӳсĕрĕпе пушарта кăнса выртать. Кусем йăлтах – хальхи пурнăçран, тахçанхи тамăкран туртса кăларнисем мар.

«Хальхи пурнăçа кĕнекере питĕ тĕрĕс, чуна хĕсмелле, пуçа витмелле тĕрĕс кăтартнă», – терĕç Чăваш наци вулавăшĕнче пулса иртнĕ хăтлавра чăваш учительницисем. Вĕсем ăна Шупашкара пĕлĕве ӳстерме килсен ятарласа вуласа тухнă та хăйсене роман килĕшнине, нумай шухăшлаттарнине тĕплĕн, ӳкерчĕксемпех, ăнлантарса пачĕç. Роман хуçине виççĕмĕш кĕнекине якатмалăх сĕнӳсем те пулчĕç.

Ман шутпа, романа чăваш хĕрарăмĕсем кирек хăшĕ те алăран пăрахмасăр вулама пултараççĕ. Унта шăпа, телей, юрату, пулăшу, тивĕç, кĕвĕçӳ, ăмсану, элек, вилĕм тата ытти нумай-нумай пулăм пирки автор та, сăнарсем те пăшăрханса шухăшлани нумай. Вăл шухăшсем кашни çын пуçĕнчех пур. Тĕслĕхрен, Машăн пĕр шухăшлавĕ: «Этем тени выльăхран ăс тата чĕлхе пуррипе уйрăлса тăрать. Анчах мĕн вăл ăс? Мĕн тума кирлĕ вăл этеме, енчен те эсĕ ыттисене хăв шаюпа çеç виçме-шайлаштарма пултараятăн пулсан? Мĕн тума кирлĕ этеме чĕлхе, енчен те ун чаракне пĕлместĕн, кашни сăмаха шухăшласа калаçмастăн пулсан? Выльăх пек чĕмсĕр, чĕлхесĕр пулас та паян мĕн çисе ĕçесси пирки çеç шухăшлама пуçлас» /60 с./. Е тата: «Çын теме те хăнăхать тетпĕр эпир час-часах. Анчах чĕререн шанса пурăннă çын сана куç хыçĕнче йĕпленине, сан пирки киревсĕр сăмахсем сарнине каçарма е хăнăхма пулать-ши? Куçкĕрет ним çук çĕртен мăшкăлтăк шывĕпе сапнине чĕнмесĕр пăхса тăма та хевте çитмест пек. Мĕн тумалла-ха ун пек чухне?» /91 с./. Мĕнле меслет шырасан та элекçĕ çăварне тутăр витсе хураймăн.

Кĕнекене вуланă чухне тĕрлĕ шухăша ирĕксĕрех тепĕр хут пуç тавра çавăрса илетĕн те, чун майĕпен уçăлса каять. Мĕн вулани пирки вара «тĕрĕс» е «апла мар» тесе калас килсе тăрать.

Роман çăмăллăн вуланать. Унта калаçу /диалог/ нумай. Вĕсем вулава чĕрĕлетсе тăраççĕ. Студент чухне Улькка, университетри «Вутчуль» театрта выляса, Тутарстанпа Пушкăртстан таранах спектакль лартса çӳренĕччĕ. Çав хăнăху ăна пуплевсене çыпăçтарса пыма, вырăнти сăмахсемпе /пĕвĕрлентернĕ, сăрмакланă/ усă курма вĕрентнĕ тесех шутлатăп. Халапсем, ытарлăхсем, çунатлă каларăшсем вырăнлă сиксе тухаççĕ: «каскăн ăйăр валли те çирĕп вĕрен тупăнать», «пĕччен йывăç хăвăрт хăрать», «арçын тĕрекĕ пурри – хĕрарăмшăн çăмăллăх».

Романа хăй те сăвăпоэма çыракан, Улькка пекех маттур çилçунатçă Галина Матвеева /Антонова/ пичете хатĕрленĕ. Вăл та тăрăшса ĕçленĕ, вулакана меллĕ пултăр тесе романăн нумай йĕрлĕ тытăмне, ĕçсен çыхăнăвне, сăнарсен чĕлхине якатнă. Виççĕмĕш кĕнеки хатĕр пулсан авторпа редактор романа çĕнĕрен тӳрлетсе, кĕскетсе-хушса кăларма палăртаççĕ. Роман пĕлтерĕшĕ хăпартăр, сăнарĕсем уçăмлăрах пулччăр тесен тĕременпе /редакторпа/ автор юнашар ларса, критиксене итлесе пăхса тӳрлетсен аванччĕ. Çырулăхпа ларма çук кансĕр ĕçри çынна пĕччене çав тери пысăк тепĕр лава ăсталăх тӳпине хăпартма шутсăр йывăр. Çавăнпа вĕсем вулакансен, литература критикĕсен кашни асăрхаттарăвне çиленсе мар, хапăлласа кĕтеççĕ. Эппин, кĕнекене вуларăр пулсан, хăвăр асăрхаттарусене авторпа редактора пĕлтерме ан ӳркенĕр.

Вăрнар районĕн хĕрĕ Улькка Эльмен – Ольга Геннадьевна Куликова – 5 кĕнеке авторĕ. «Тăван Атăл» журналта кăçал унăн тепĕр хайлавĕ тухрĕ. Халĕ 6-мĕш кĕнеке /«Упраймарăм сана» романăн 3-мĕш кĕнекине/ çырать. Сюжечĕ хатĕр ĕнтĕ. Ĕç-пуç сăнарсене Мускав таранах илсе каять. Кĕнеке ĕртине /сюжетне/ пурнăç хăй хурса панă, мĕншĕн тесен çыравçă ăна аякран сăнаса лармасть – вăл хăй çав хĕрӳ пурнăçра çаврăнать. О.Г.Куликова çыравçă «Вурнардорстрой» пĕрлешĕвĕн тĕп директорĕ, пысăк ĕç пирки самант манмасăр шухăшлакан çын. Романне вăл ыйхă татса каçсерен хайлать. Çырни вара ăнăçлă, халăха кирлĕ пулса тухать. Пултарулăхĕ пурах унăн. Ĕçченлĕхне, чăтăмлăхне пултарулăх паттăрлăхĕ тесех хаклатăп.

**Виталий СТАНЬЯЛ.**

АСЛĂ ÇĔНТЕРӲ: 70 ÇУЛ

**Александр АРТЕМЬЕВ**

# Ан авăн, шĕшкĕ!

Хĕвел инçетри тусем хыçне пытанчĕ. Пин-пин çутăпа йăлкăшма пуçларĕ айлăмра ларакан Порт-Артур. Тинĕс çинчен нӳрĕ çил вĕрме тытăнчĕ. Пулăçсен шурă парăслă киммисем пĕрерĕн-пĕрерĕн çыран хĕррине пырса чарăнчĕç.

Илемлĕ-çке эсĕ, Маньчжури каçĕ!

Çакăн пек çуллахи ăшă каçсенче эпĕ илĕртӳллĕ кăнтăр çанталăкĕпе сахал мар килентĕм. Анчах кĕçĕр кунта, ют çĕршывра, мана нимĕн те илĕртмест. Пĕртен-пĕр ĕмĕтĕм – Тăван çĕршыва хăвăртрах çитесси. Çуралнă ялăмра тăвата çулталăк хушши пулаймарăм, çамрăксен уявĕсенче савăнса çӳреймерĕм. Мĕнле-ши халь унта? Çак ĕмĕтпе çĕкленсе порт еннелле васкатăп, ту хушшинчи ансăр, кукăр-макăр сукмакпа тинĕс хĕрринелле анатăп, аллăмри чăматан йывăрăшне те, кутамкка çакки хулпуççие каснине те сисместĕп.

Тăван çĕршыва кайма тухнă салтаксем порт çывăхĕнчи пĕр пысăк сада пуçтарăннă та пăрахут килессе кĕтеççĕ. Унта та кунта вут çути ялкăшать: салтаксем каçхи апат пĕçереççĕ. Йĕритавра калаçса кулни, юрлани илтĕнет.

Эпĕ ушкăнтан ушкăна çӳресе хамăр енчисене шыратăп. Сасартăк çывăхрах чăваш юрри илтĕнсе кайрĕ, анчах сăмахĕсем... «Она вон, шишка, она вон...» шăрантараççĕ иккĕн, чăваш сăмахĕсене вырăсларах каласа. Эпĕ ним шутласа тăмасăр юрлакансем патне, пĕр лапсăркка улмуççи айне, чупса пытăм.

– Чăвашсем пур-и? – ыйтатăп юрлакансенчен.

– Пур, пур! – теççĕ иккĕшĕ те харăсах.

Хăйсем урисене тутарла хуçлатса вут умне ларнă та чăваш юррине шăрантараççĕ кăна. Иккĕшĕ те сержант. Иккĕшин те кăкăр тулли медаль.

Эпĕ вĕсемпе хăвăртах паллашрăм.

Сарлака питлĕ, хĕсĕкрех куçлă казах йĕкĕчĕ Курмангалиев, питĕ хавасласкер, шӳт тума юрататъ иккен: кашни сăмаха кулăшла çавăрса хурать. Унăн юлташĕ – сарă вăрăм çӳçлĕ, ăшă кăмăллă вырăс каччи – Виктор Ворончихин.

– Каçарăр, эсир шӳт тăвас тетĕр пуль, ăçта-ха ман земляк? – ыйтатăп вĕсенчен.

– Ан пăлханăр, сержант, кунтах вăл, – терĕ Курмангалиев.

– Авă, – хушса хучĕ Ворончихин пуçĕпе аяккалла сĕлтсе.

Чăнах та, пирĕнтен инçех те мар, чăнкă çыран хĕрринче, пĕр салтак каллĕ-маллĕ уткалать, пĕрре шыв хĕрринех пырса тинĕс хумĕсем шурă чуллă çырана çапăннине сăнать, унтан вăрт çеç аяккалла пăрăнса уттарать. Унăн хусканăвĕнче темĕнле виçесĕр телей, ачалла чăрсăрлăх, ниçта чикме çук савăнăç пурри сисĕнет.

Эпĕ ун еннелле утма тăнăччĕ кăна – Курмангалиев чарчĕ:

– Каçарăр, сержант... Пăлханать халĕ вăл, çавнашкал ăш вăркатмăш хыпар пур унăн... Чăрмантарас марччĕ ăна...

– Çыру илнĕренпе лара-тăра пĕлмест, ĕнертенпех çапла, çыран хĕрринче çӳресе пăрахут килессе кĕтет, – хушса хучĕ Ворончихин.

Икĕ сержант хăйсен тусĕ çинчен çав тери ăшшăн калаçни мана кăштах тĕлĕнтерчĕ. Эпĕ вĕсемпе юнашарах хам чăматан çине лартăм.

Вут çине котелокпа пăтă пĕçерме çакнă – чумизă пăтти сиксе вĕресе котелока чĕтрентерет, çунăк шăрши сăмсана кăтăклать.

/Малалли пулать/.

На работу в Москву вахтовым методом
**требуются**
**УБОРЩИЦЫ-ПОСУДОМОЙЩИЦЫ.**
Минимальный срок вахты 2 мес., с графиком 6/1.
**З/п от 25000 до 30000 руб./мес.**
**Предоставляем бесплатное жилье и 3-разовое питание.**
Требования: чистоплотность и трудолюбие.
**Тел. 89261044494, Марина.**
**Звонить с 10.00 до 20.00**

## *ТУЯНАТĂП КУПЛЮ*

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-962-599-47-06.

**39.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**109.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

**298.ПОРОСЯТ** – дорого, круглый год. Самовывоз. Т. 89063825331.

## *ПУЛĂШУ УСЛУГИ*

**38.ЧИСТКА КОЛОДЦЕВ.** Т. 8-961-342-90-59.

**45.Лечение алкоголизма, табакокурения.** Т.: 8-903-066-29-02, 89276673368. *Лиц. 5001001230 от 08.06.2007. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**51.Бурение колодцев,** скважин, кольца колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 89603021293.

**171.Кровельные, фасадные работы.** Т. 8-903-322-04-79.

**246.Бурение скважин** на воду до 50 м. **Чистка** старых **скважин.** Т. 8-906-381-60-37.

**260.Бурение скважин** /до 90 м./. Недорого. Т. 89278625531.

## *РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ*

### *Саламлатпăр*



***Юратнă инкене, пиччен мăшăрне, ĕç ветеранне – Елчĕк районĕнчи Вăрăмхăва ялĕнче пурăнакан Надежда Петровна НОСОВĂНА – 80 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн, чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, вăй-хăват, иксĕлми телей, нумай-нумай çул пурăнма сунатпăр. Тараватлăхпа ĕçченлĕх, сăпайлăх тата хисеп яланах санпа пĕрле пулччăр. Пире кăмăлтан кĕтсе илсе ăшпиллĕн ăсатнăшăн чун-чĕререн тав тăватпăр.***

***Саламлаканĕсем – Канаш районĕнчи Уçырма ялĕнче пурăнакан тăванĕсем.***

## *СУТАТĂП ПРОДАЮ*

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ пропаренные,** вибропрессованные 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 28 руб., 9х20х40 – 24 руб. Высокое качество. Доставка манипулятором. Т. 8-967-470-46-77.

**3.АКЦИЯ! ПЕСОК, ГРАВМАССУ,** щебень, **керамзит.** Доставка по низким ценам. Т. 8-967-470-46-77.

**4.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**6.КРОВАТИ от 2000 р., ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Т.: 89278441501, 674642.

**7.ГРАВМАССУ, песок, щебень, керамзит,** чернозём. Дёшево. Доставка. Т.: 89276689713, 38-97-13.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Дёшево. Доставка. Т.: 89033583021, 44-30-21.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**17. Песок, гравмассу, керамзит,** чернозём, **навоз.** Доставка. Т. 8-905-197-40-19.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники, опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **к/кольца.** Доставка. Т. 89033468556.

**30.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**31.Гравмассу, песок, керамзит,** кирп. бой. Д-ка. Т. 89033225766.

**37.**Ворота, калитки, **заборы,** навесы, **ТЕПЛИЦЫ.** Кровля, обшивка сайдингом. Общестроительные и сварочные работы. Замер. Д-ка. Установка. Гарантия. **Пенсионерам – скидки.** Т.: 8-902-288-14-47, 38-75-74, metalservis21.ru

**48.Керамблоки, бой** кирпича, бетона; сваи, **ОПГС,** песок, **ФБС.** Т. 89063814420.

**58.Гравмассу, щебень, песок, керамзит,** бетон, чернозём. Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**59.ТЕПЛИЦЫ от производителя.** Низкие цены. Т. 48-16-54.

**74.Керамблоки** вибропрессованные, пропаренные. Все размеры. Доставка. Т. 89176776846.

**89.БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. Т. 89373866629.

**123.Гравмассу, песок, навоз.** Доставка по старым ценам. Т. 8-927-850-28-21.

**127.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната** от производителя. Т. 8-919-679-47-04.

**128.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната** от производителя. Т. 8-927-667-62-02.

**133.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя около 100 видов, **сетку** сварную, кладочную, штукатурную; **проволоку,** столбы. Доставка. Т.: 68-30-45, 8-937-952-22-11.

**138.ОКНА, ТЕПЛИЦЫ, обшивка** домов, **двери** /сталь/. Гарантия 15 л. Скидки 40 %. Т. 89196624097.

**143.ТЕПЛИЦЫ** от производителя – от 5950 руб. Т. 89276682828.

**170.Профнастил, металлочерепицу, сайдинг.** Т. 89033220479.

**172.Тротуарные ПЛИТЫ, брусчатку.** Доставка, укладка. Скидки. Гарантия. Т. 89033220479.

**174.МОГИЛЬНЫЕ ОГРАДЫ, заборы, ворота** и др. изделия от производителя Т. 89276682828.

**180.Отруби, зерно, к/корм,** сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

**183.**Окна Чувашии. **ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, жел. двери.** Т. 89050281182.

**205.Цемент,** песок, **гравмассу,** щебень, **керамзит, блоки.** Д-ка. Т.: 89278497675, 89278497674.

**295.Песок,** ОПГС, **щебень,** известь, асфальтную крошку, **навоз,** землю, **торф.** Доставка. Т.: 89196741016, 89603003816.

**296.ПЧЕЛОСЕМЬИ.** Т. 89613429059.

**299.УДОБРЕНИЕ** – аммиачную селитру /мочевину/. Т. 8 /8352/ 37-20-56.

**310.Распродажа б/у ЖБИ:** плиты покрытия, фундаментные блоки, перемычки, прогоны, фермы, лестничные марши. Изготовлено строго по ГОСТу. Возможна доставка. Т. 89613448801.

## *ĔÇ РАБОТА*

**297.Требуются каменщики, монолитчики** в Москву. Оплата своевременная. Т. 8-962-321-70-11.

## *И-ХИ-ХИК*

**Раççей тата Германи командисем футболла выляççĕ. Нимĕçсем 2:0 шутпа выляса илсе пыраççĕ.**

**– Ачасем! – кăшкăрать трибуна çинчен старик. – Эпир вĕсене Сталинград çывăхĕнче те, Курск пĕккинче те ăшаларăмăр, Днепр хĕрринчен тарса кайсан Берлинра хăваласа çитрĕмĕр!!! Эсир халĕ мĕн тăватăр, мĕншĕн ята яратăр???**

**– Сирĕн ун чухне урăх тренер пулнă çав... – илтĕнсе каять пăшăрхануллă сасă юнашар.**

* * *

**Лайăх арăмсем аннерен мар... лайăх упăшкаран çураласçĕ.**

* * *

**Хунямана юрас тесе Петров:**

**– Сире, Анна Петровна, никам та 50 çул парас çук! – тесе персе янă. Анна Петровна 46 кăна тултарнине пĕлмен çав вăл...**

* * *

**Корреспондент çĕнĕ вырăсран ыйтать:**

**– Калăр-ха, ак çакă чаплă икĕ виллăна тата виçĕ мерседеса эсир хăвăрăн укçапах илнĕ-и?**

**– Паллах.**

**– Эпĕ вара иккĕленетĕп. Халăх укçипе туянман-и эсир вĕсене?**

**– Ан тĕлĕнтер-ха, халăхăн ун чухлĕ укçа ăçтан пултăр?**

* * *

**Нумаях пулмасть çĕнĕ йышши кĕпе çăвакан машина шутласа кăларнă. Вăл çакăн пек ĕçлет:**

**– Япалана хурăр та режима суйлăр. Тавтапуç. Так, кĕпе çухи çинче мĕн-ха ку? Ай, Ленаааааа, санăн упăшкун кĕпи çухи çинче – ют писев йĕрĕ!!!**

* * *

**Инçетри çулсене çӳрекен водитель машинине пăхăнтараймасăр пĕр çурта кĕрсех каять. Кăмака çинче – кинемей. Мĕн те пулин каламалла вĕт-ха.**

**– Калăр-ха, тархасшăн, Мускава мĕнле каймалла? – çухалса каймасть водитель.**

**– Ниçта та пăрăнмалла мар: ак çапла – кухня витĕр тӳптӳррĕнех малалла вĕçтерĕр, – ним пулман пек хуравлать кинемей те.**



**Шарик уçăлма тухать-и?**

# Çĕнтерӳ пире кун-çул пиллени çутçанталăк чĕрĕлнĕ чухне...





*Алексей ВОРОБЬЕВ*

## Пĕрчĕ куçĕ

Салтак пиччем, ăçта çухалтăн?
Хире тухас килет санпа.
Мехел сан пурччĕ,
Пурччĕ хал та
Çĕн вăрлăх ылтăнне сапма.

Сана тĕп турĕ вăрçă шарĕ.
Çук, эс пĕтмерĕн пуçĕпех.
Тырпул пулса çĕклентĕн мар-и? –
Пăхатăн пĕрчĕ куçĕпе.

Шута каять те пусă шăпăрт,
Сăнатăп тулă пучахне:
Кăвак çутпа вăл шăпăр-шăпăр
Тăкать чĕр сывлăм куççульне.

Сан кăмăлу пирте йăл çиçĕ.
Пулсассăн çăкăр вăл кĕтем,
Паш хăпарса çав çăкăр пиçĕ, –
Эс пулнă вашават этем.

## Кĕçĕн Таяпасем «Чăваш хĕрарăмĕпе» туслă



Çак ял çыннисенчен кашни каймассерен тĕлĕнсе таврăнатăп. Пирĕн хаçат шăпишĕн чунран пăшăрханаççĕ ку тăрăхра. «Эсĕ «Чăваш хĕрарăмне» çырăнтăн-и? Асту, айккинче тăрса ан юл», – кĕркунне те, хальхинче те пĕр-пĕрне хистесех хаçатпа туслашма васкарĕç Елчĕк тăрăхĕнчи Кĕçĕн Таяпасем. Хăйсем çырăннă хыççăн тустăванне, кӳршисене почтальонпа тĕл пулма вырăнти администраци çуртне чĕнсе илчĕç. Çывăх çыннисене çуралнă кунпа парне вырăнне хаçат çырăнса паракансем те тупăнчĕç вĕсен хушшинче. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Валерий Петров та тĕслĕх кăтартрĕ, вăл ĕç тата тыл ветеранне Мария Скворцовăна пирĕн кăларăмпа туслаштарчĕ.

«Чăваш хĕрарăмне» шăматкун каçхине алăран ямастпăр. «Эсĕ тата эпĕ» страница чуна çывăх, тепĕр чухне хамăр çинчен çырса кăтартнă пек те туйăнать. Чăваш хĕрарăмĕн шăпи çинчен çырнă статьясене хумханмасăр вулама çук. Шăпăртатсах куççуль тăкăнни те пулать. Шӳтсенчен те хырăм тытсах кулатпăр. Сирĕн хаçат эмел вырăнĕнчех, йывăр чухне чуна пусарать, йăпатать. Малтан унсăрăн мĕнле пурăннă-ши?» – терĕç хаçат тусĕсем.

«Чăваш хĕрарăмне» кашни килтех кăмăлласçĕ. Çырăнманнисем сутăн илеççĕ», – каласа кăтартать Галина Головина почтальон. Тĕнчери, çĕршыври тата Чăваш Енри çĕнĕ хыпарпа паллашас тата ăс-хакăл çӳпçине пуянлатас тĕллевпе кĕске хушăрах ку хутĕнче те малтанхинчен кая мар хаçат çырăнчĕç Кĕçĕн Таяпасем. Ялти çамрăк хĕрарăмсем те, тивĕçлĕ канăва тухнисем те пирĕн хаçата çитес çурçуллăхра илсе тăмашкăн хапăлларĕç.

**Елена АТАМАНОВА.**

**Тăванăм, вулаканăм!**
**«Чăваш хĕрарăмне» çитес çурçуллăхра илсе тăмашкăн малалла çырăнтараççĕ. Хакĕ: 360,66 тенкĕ. Хăвăр та вулăр, çывăх тăванăрсене те çырăнса парса парне кӳме ан манăр.**

## Аслă Çĕнтерĕве уявламалли мероприятисен планĕ

| | |
|---|---|
| **Майăн 8-мĕшĕ 10.00** | *Пĕтĕм Раççейри "Асăну вахти" акци.* Çар Мухтавĕн Монуменчĕ умне тата аманса госпитальсенче вилнĕ çар çыннисен тăванла масарĕнче чечексем, чечек кăшăлĕсем хуни, хисеплĕ караул тăни. Ирттерекен вырăн: "Çĕнтерӳ" Асăну комплексĕ, Б.Хмельницкий урамĕнчи масар. |
| **Майăн 8-мĕшĕ кунĕпе** | *Пĕтĕм Раççейри "Пурне те ятран аса илер..." акци.* Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин фрончĕсенче пуç хунисен ячĕсемпе видеороликсене трансляцилеççĕ. Ирттерекен вырăн: Хӳтĕлевçĕ-Амăшĕн Монуменчĕ, Хĕрлĕ тӳрем. |
| **Майăн 8-мĕшĕ 20.00** | *"Пĕтĕм тĕнчипе, пĕтĕм халăхпа, пĕтĕм çĕрпе..."* митинг-реквием. Ирттерекен вырăн: Хӳтĕлевçĕ-Амăшĕн Монуменчĕ. |
| **Майăн 8-мĕшĕ 18.30** | *"Аслă Çĕнтерӳ" ячĕпе ирттерекен хурлăхлă, çав вăхăтрах савăнăçлă мероприятисем.* Ирттерекен вырăн: Чăваш Республикин муниципалитет районĕсемпе хулисем, Шупашкар хулинче – ЧР Культура министерствин "Симфони капелли" бюджет учрежденийĕ. |
| **Майăн 9-мĕшĕ 20.00** | *Хор фестивалĕ.* Шупашкар хулин пĕрлештернĕ хорĕ. Гала-концерт. Ирттерекен вырăн: Хĕрлĕ тӳрем. |
| **Майăн 9-мĕшĕ** | *Пĕтĕм Раççейри "Халăх Çĕнтерĕвĕ" акци. Шупашкар хулин тĕп урамне фронтовиксен сăнӳкерчĕкĕсене вырнаçтарни.* Ирттерекен вырăн: Шупашкар хули. |
| **Майăн 9-мĕшĕ** | *Пĕтĕм Раççейри "Музейсен каçĕ" акци.* Ирттерекен вырăн: Чăваш Республикин патшалăх тата муниципалитет музейĕсем. |
| **Майăн 9-мĕшĕ 10.00** | *Мухтав Монуменчĕ умне чечексем хуни.* Ирттерекен вырăн: "Çĕнтерӳ" Мемориал комплексĕ. |
| **Майăн 9-мĕшĕ 12.00** | *Уяв митингĕ.* Ирттерекен вырăн: Хĕрлĕ тӳрем. |
| **Майăн 9-мĕшĕ 12.20** | *Шупашкар гарнизонĕн пĕрлештернĕ полкĕ тата çар техники Хĕрлĕ тӳремпе иртни.* |
| **Майăн 9-мĕшĕ 13.00** | *Пĕтĕм Раççейри "Вилĕмсĕр полк" акци.* Ирттерекен вырăн: Хĕрлĕ тӳрем. |
| **Майăн 9-мĕшĕ 13.30-14.00** | *Пĕтĕм Раççейри "Салтак пăтти" акци /çар кухнине кăтартни/.* Ирттерекен вырăн: Хĕрлĕ тӳрем. |
| **Майăн 9-мĕшĕ 13.00** | *Ветерансем валли "Çар кухни".* Ирттерекен вырăн: Хĕрлĕ тӳрем. |
| **Кунĕпех** | *Çĕнтерӳ Кунне халалланă концерт.* Ирттерекен вырăн: Хĕрлĕ тӳрем. |
| **Майăн 9-мĕшĕ 22.00** | *Çĕнтерӳ Салючĕ.* Ирттерекен вырăн: Хĕрлĕ тӳрем. |
| **Июнĕн 22-мĕшĕ** | *Пĕтĕм Раççейри "Астăвăм Çурти" акци.* Ирттерекен вырăн: "Çĕнтерӳ" Мемориал комплексĕ. |

*Хисеплĕ вулакансем! «Чăваш хĕрарăмĕн» паянхи номерĕ Аслă Çĕнтерӳ 70 çул тултарнине халалласа «Вăрнарти аш-какай комбиначĕ» АУО (Генеральнăй директорĕ – Н.В.АЛИВАНОВ) тата «ТУС» АХО (Генеральнăй директорĕ – Н.Ф.УГАСЛОВ) пулăшнипе тĕрлĕ тĕспе пичетленчĕ. Таймапуç «Хыпар» Издательство çурчĕн шанчăклă тусĕсене!*

« ХЫПАР »
Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор В.В.ТУРКАЙ

Чăваш хĕрарăмĕ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – М.Р.ТУМАЛАНОВА

Хаçата Федераци çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службы 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ
ЙЫТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.
Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07
Электрон почти: hypar@mail.ru

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи» рубрикăсенче пичетленеççĕ.
Номере 07.05.2015 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 8277. Заказ 1726.